25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
МАРТ
3
ЫТЛАРИКУН
52(6077) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем çинчен

М. И. КАЛИНИН.

Ял уменче халĕ государствăн ответлă задачисем тăраççĕ. Хĕрÿ ĕç вăхăчĕ çывхарса килет, ялхуçалăх ĕçĕсем пуçланаççĕ.

Халĕ, 1942 çулта, вăрçă пуçланнăранпа тăххăрмĕш уйăха кĕнĕ вăхăтра, пирĕн çĕршыври тĕрлĕрен ĕçсене илсе хаклаcа пăхсассăн, çуркуннехи уйхир ĕçĕсене пĕрремĕш черетре тăракан ĕçсем тесе шутламалла. Боеприпассемпе хĕçпăшал туса кăларакан производствăна çеç унпала танлаштарма пулать. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсен йывăрăшĕ, тĕпрен илсен, колхозниксем çине тиенĕ мĕнĕ тата çав ĕçсем промышленносри ĕçсемпе пĕр виçерех тăнă май ĕнтĕ колхозниксемпе колхозницăсем фронтăн малти позицийĕсенчи вырăнсене йышăнчĕç теме пулать. Ялхуçалăх ĕçĕсенче прорыв пулни вăрçă фрончĕн участокĕсенчен пĕринче ĕçсем ăнăçсăр пулнинчен кая мар сиенлĕ пулнă пулĕччĕ.

Пирĕн çĕршыв хăйĕн мĕнпур вăйĕсене пухса çĕнтерÿ тăвассишĕн кĕрешет. Миллионшар совет çыннисем — фронт патĕнчен пуçласа Владивостока çитиччен — ирсеренех Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тăплĕн вулаççĕ е радио тăрăх тимлĕн итлеççĕ. Хĕрлĕ Çар тунă çĕнĕ ситĕнÿсем çинчен пĕлсе савăнаççĕ. Çапла ĕнтĕ çав ситĕнÿсене тума кирлĕ условисенчен пĕри вăл—Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене ситлĕклĕ таран апат-çимĕç парса тăрантарни пулса тăрать.

Эпир хамăр ума фашистсен çарне çĕмĕрсе тăкас задача лартнă. Пирĕн çак пысăк задачăна пурнăçа кĕртме ситлĕклĕ таран çар кирлĕ. Апла пулсан, пирĕн çарăн йышĕ питех те пысăк пулма тивĕçлĕ. Хамăрăн Хĕрлĕ Çара пирĕн лайăх тумлантармалла, ăна хĕçпăшалсемпе боеприпассем кирлĕ таранах парса тăмалла. Çав япаласене миллионшар совет çыннисем фабрикăсемпе заводсенче хатĕрлеççĕ. Анчах та пирĕн çар фронтра лайăх çапăçтăр тесессĕн тата рабочисем ăна валли хĕçпăшалсемпе боеприпассем татти-сыппиисĕр парса тăччăр тесессĕн, хамăрăн çарпа хулари ĕçсыннисене лайăх тăрантарса усрас пулать, тырпул, апкакай, пахча-çимĕçсем ытларах парса тăрас пулать.

Фронтри çынсене тутă тытмалла, вĕсене тĕрлĕрен апат-çимĕç парса тăмалла, мĕншĕн тесен окопри пурнăç, тăшман чееерех пулса улталасран пĕрмаях сыхланса тăрасси боецран питех те нумай вăй-хăват ыйтать, боецăн организмне кунта татти-сыппиисĕрех вăйлăн ĕçлеме лекет. Вăрçăра çĕнтерÿ тăвас ĕçре тырпул мĕнле вырăн йышăнса тănине, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен çынсем уменче мĕн тери ответлă ĕç тăнине çакăнта каланинчен ĕнтĕ уççăнах курсе илме пулать.

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсен хăйсен уйрăмлăхĕсем пур. Уйхир ĕçĕсене туса пымалли йĕркесене çутçанталăк хăех ла йăх кăтартса парать. Çуркуннехи ĕçсене туса иртермелли вăхăт, калăпăр, ака тумалли, пахча-çимĕçсем лартмалли вăхăт пур вырăнта та тенĕ пекех кĕске пулать. Çуркунне уйхир ĕçĕсене мĕнле те пулин кĕске вăхăтра туса иртерме тăрăшас пулать, çакă вăл яланхи йĕрке пулма тивĕçлĕ. Хăйĕн тимсĕрлĕхне пула е сÿрĕк ĕçленине пула ĕçе кая юлса туса пыракан çын уйхиртен е нимĕн те илеймест, е питĕ сахал илет, çавнашкал çын вара пачах та тырпулсăр тăрса юлма пултарать, государство уменчи, халăх уменчи хăйĕн обязанноçĕсене кирлĕ пек пурнăçа кĕртеймест. Çавнашкал çын ĕнтĕ — вăл хăй кирек кам пултăр, хăть колхоз председателĕ, хăть МТС е совхоз директорĕ, хăть райисполком председателĕ, хăть райком секретарĕ, — вăл пирĕн çара хăвăртрах çĕнтерÿ тума сунатăп тесе шантарать пулсассăн та, унăн сăмахĕсем виçĕ пуса та тăмаççĕ. Хăйсен ĕçĕпе усă мар, тăкак çеç кÿрекен руководителĕн шантарса каланĕ сăмахĕсем мĕне кирлĕ вара вĕсем? Лайăх пăхакан çын аллинче паха çимĕçсем панă çĕр çавăн пек сÿрĕк ĕçлекен çын аллинче нимĕнле çимĕç те парайми пулса юлать. Фронта пулăшас тени вăл çын хăй мĕн тума пултарнин пурне те ĕçлесе илессине, уйрăмăлах çĕртен мĕн май килнине пурне те туса илессине пĕлтерет. Кам çавăн пек ĕçлет, çавă тăван çĕршывшăн малти позицисенче тăрса кĕрешекенсемпе пĕр ретрех пырать.

Акана лайăх иртерес тесессĕн, ăна лайăх хатĕрленсе кĕтсе илмелле. Хатĕрленÿ ĕçĕсене эпир мĕн чухлĕ тĕплĕнрех те лайăхрах туса иртеретпĕр, ака та çавăн чухлĕ сăмалрах та лайăхрах пулса иртет.

Мускав облаçĕнче çураки апрель уйăхĕн вĕçĕнче пуçланать. Апла пулин те ВКП(б) Мускав Область Комитечĕн пленумĕ кăçалхи февралĕн 16-мĕшĕнчех, ака пуçланасси икĕ уйăх çурă малтан, область çуракине мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен ĕçсынни депутачĕсен Совечĕн Мускав область исполком председателĕн докладне итлесе сÿтсе явнă. Калас пулать, çак ĕçе Мускав Комитечĕ ир мар, вăхăтра туса иртернĕ.

Материалсем пурте хатĕрех пулсассăн, çуракине хатĕрленме кирлĕ вăхăта кĕскетме те пулать. Калăпăр, вăрлăх пулсан, ăна кĕркуннех хывса хăварнă пулсассăн, ăна акма хатĕрлесе çитерме вăхăт нумаях та кирлĕ мар. Çав вăрлăх мĕнле шăтма пултарассине, вăл тасипе таса маррине, вăл мĕнле усранине çеç тĕрĕслесе тăмалла. Кун пек чухне ĕç ытлашши нумаях мар темелле. Вăрлăх çук пулсассăн е ăна улăштарма тивет пулсассăн вара ĕç сасартăках йывăрланать. Кун пек чухне вара руководителĕн çав чăрмавсене вăхăтрах пĕтерес тесе, çине тăрса тимлĕн ĕçлеме лекет.

Ялхуçалăх инвентарĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе хăшпĕр облаçсенче самаях ĕçлемо тивет. Вăхăтлăха фашистсен аллинче пулнă облаçсемпе колхозсем тĕлĕшпе уйрăмăнах çавна каласа хăварасшăн эпĕ. Ялхуçалăхĕнче кирлĕ ĕç хатĕрĕсене пухма, юсама тата вырăнтах хăйсеннех хатĕрлеме халех тытăнас пулать. Ялхуçалăх инвентарĕсен запаслă пайĕсене çеç мар, тата тимĕре те центртан план тăрăх ярса парассине кăна кĕтсе лармалла мар. Вăрçăччен çавăн пек центртан кăна илсе тăнипе иртĕхсе кайнă çынсемшĕн, тен, ку сăмахсем ĕнентерÿллех мар пек, колхозри пурнăçшăн вырăнлах мар пек туйăнаççĕ пулĕ. Анчах та чăннипе колхозра, тĕпрен илсен, эпĕ каланă пек ĕçлес пулать, колхоз председателĕсен, колхозри бригадирсен, совхозсемпе МТС директорĕсен халĕ эпир кĕнле обстановкăра пурăннине шута илмелле тата çав обстановкăна килĕштерсе ĕçлемелле. Металл пирки калас пулсан, ăна кашни районрах тупма пулать тесе шутлатăп эпĕ. Уйрăмăнах вăл нимĕçсем чакса кайнă çулсемпе çул хĕррисенче, вăрмансенче, пăрахса хăварнă окопсенче тата нимĕçсенчен ирĕке кăларнă ялсенче хăйсенче те ытлăн-çитлĕнех йăваланса выртать. Паллах, ку металл сортовой металах мар пулин те, анчах çителĕклĕ таранах пахалăхлă, мĕншĕн тесен вăл ютçĕршыв металĕ, пуриччен ытла, нимĕçсен металĕ пулса тăрать.

Шантарсах калама пулать, ĕçе юратакан колхоз председателĕ, МТС е совхоз директорĕ, МТС-ри мастерсемпе тата тимĕрçĕсемпе пĕрле, хăйсене кирлĕ материала тупаççех. Паллах ĕнтĕ, кам урăх çĕртен пулăшассине кăна кĕтсе ларать, çавăн умне уйхирсем акăнмасăрах юлас хăрушлăх тухса тăрать. Ес çавăн пек пулас пулсан, унта, манăн шутпа, айăплисем чи малтан МТС-сен, колхозсемпе совхозсен руководителĕсем пулса тăраççĕ.

Вунă çул хушши ытла пирĕн правительство çулсеренех çĕршер миллион тенкĕлĕх ялхуçалăх орудийĕсем туса кăларса, вĕсене колхозсемпе совхозсене парса пычĕ. Эпир хĕвелтухăçĕнчи облаçсене те çав орудисене пĕр пекех парса пынă. Тракторсенчен пĕр пайне çар валли илсе кайнине шутласассăн та, пирĕн ялхуçалăхĕнче хальхи вăхăтра тракторсемпе ялхуçалăх машинисем, инвентарьсем тылай-ха, çавсемпе тăрăшса тата пĕлсе усă курсассăн, çураки задачине ăнăçлăнах пурнăçа кĕртме пулать.

Ĕçре малта пыракан колхозсемпе МТС-сен руководителĕсем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене тĕрĕс ăнланаççĕ. Сăмахран, ку енĕпе акă, Алтай крайĕнчи Молотов ячĕпе тăракан артельри, «Красный борец» артельри колхозниксемпе Шатуновски МТС коллективĕн çырăвне илсе кăтартма пулать. Вĕсем паракан сĕнÿсемпе килĕшмелле кăна мар, вĕсене хапăлласах йышăнса, çине тăрсах пурнăçа кĕртме тытăнмалла. Молотов ячĕпе тăракан артель 1942 çулта тĕштырăсем акмалли çĕр лаптăкне 235 гектар, техникăллă культурăсем акмалли тата пахча-çимĕçсемпе çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне 42 гектар ÿстерме хăй çине обязательство илнĕ. Усă курмалли çĕр лаптăкне çавăн чухлĕ ÿстерни вăл пĕр колхозшăн чылаях пысăк ĕç пулса тăрать. Колхозниксем çавăн пек обязательствăсем илни вăл алтаецсем хальхи вăхăт мĕн ыйтнине тĕрĕс ăнланса илнине кăтартса парать. Ытти облаçсенчи мĕнпур колхозниксен те çаксен примерĕпе ĕçлемелле, тĕштырă акмалли çĕр лаптăкне пур енĕпе те ÿстерсе пымалла, çĕнĕ çĕрсемпе усă курма тытăнмалла, мĕнпур ĕçсене тырпулпа пахча-çимĕçсем ытларах илес лозунгпа туса пымалла. Колхозниксем çав лозунга ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыни вăл фронта чăннипех те пур енлĕн пулăшса пыни пулать. Унтан та ытларах, çавăн пек колхозниксемпе колхозницăсем Гитлера поражени кÿрес ĕçĕн активлă участникĕсем пулса тăраççĕ.

— Ытлашши çĕр çук çĕрте мĕнле тумалла-ха вара? — тесе ыйтĕç кунта. Ун пек çĕрте, мĕнле пулсассăн та, халиччен нихăçан пулман вăйлă тырпул, вăрçă вăхăтĕнчи пек тырпул туса илме тăрăшас пулать. Кунта илсе кăтартнă Алтай крайĕнчи колхозсен хуçалăхĕсем пур тĕлĕшпе те лайăх хуçалăхсем пулса тăраççĕ тата вĕсен механически туртăм вăйĕсем те çителĕклĕ. Апла пулин те, вĕсем çуркуннехи уйхир ĕçĕсенче хĕсĕр ĕнесемпе, вăкăрсемпе çине тăрсах усă курма тивĕçлĕ тесе шутлаççĕ. Çакă вăл питех те тĕрĕс решени: тракторĕ вăл — тракторах ĕнтĕ, анчах вăрçă вăхăтĕнче ĕçе кÿлме юрăхлă кашни выльăхпах усă курас пулать. Государствăран сахалтарах ыйтмалла, парасса государствăна ытларах памалла, — çĕнтерĕве ăна çапла тăваççĕ те ĕнтĕ.

Туртăм вăйĕсемпе мĕнле лайăхрах усă курасси çинчен кашни колхозрах тĕплĕнрех шухăшласа пăхса сÿтсе явни кансĕрлемест, туртăм вăйĕсем тĕлĕшпе ĕç хĕсĕкрех пулассине малтанах асра тытмалла. Апла пулсан, кашни туртăм вăйĕпе питех те пĕлсе усă курмалла, туртăм вăйĕ çитменнине çапла майпа тивĕçтерсе пымалла.

Акана хатĕрленнĕ çĕрте ĕçри мĕнпур вак япаласем çинчен те тĕплĕн шухăшласа хуни кирлĕ, хальхи пур вăйсемпе тата малашне тума май пуррисемпе мĕнле усă курассине питех те витĕр курса тăмалла. Çураки пуçланиччен юлнă вăхăтпа май килнĕ таранах анлăн усă курса, пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитес пулать, акана питĕ те кĕске вăхăтра иртерме мĕн кирлисене пурне те халех туса çитермелле. Теори тĕлĕшпе илсе каласан, акана пĕр кун хушшинче иртерни чи лайăх та кĕске вăхăт пулнă пулĕччĕ. Кашни колхоз председателĕ, кашни бригадир, кашни МТС-па совхоз директорĕ çавнашкал ĕмĕтпе ĕçлесен ака ĕçĕ питех те кĕске вăхăт хушшинче ăнăçлăн та лайăх иртнĕ пулĕччĕ.

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартса тăвасси çинчен каласа хăварас пулать. Халăха апатлантарас ĕçре çĕрулми мĕн тери кирли çинчен ăнлантарса пама тăрăшни те ытлашши, вăл пуриншĕн те паллă. Апатлантарас ĕçре кăçал çĕрулми татах та ытларах кирлĕ. Çĕрулми лартса тумалли çĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе государство йышăннă плана кăçал татах та ÿстерес пулать, çакна ăна килсенче çĕрулми лартса тăвакан вырăна аслăлатнипе пурнăçа кĕртмелле. Посĕлоксенче пурăнакан рабочисен, чугунçул станцисенче ĕçлекенсен, канмалли суртсен, больницăсен тата ытти сен те урăх çĕртен илсе государство шучĕпе çеç пурăнмалла мар, вĕсен çав çимĕçсене çитĕнтерес тесе хăйсен вăй хурса ĕçлемелле, хăйсене тăранса пурăнма кирлĕ çимĕçсен пĕр пайне хăйсен пахчисенчех лартса çитĕнтермелле. Рабочисем, уйрăмăнах пысăках мар хуласенче пурăнакансем, пĕрлешсе е тата хăйсем тĕллĕнех те килĕсенче пахчасем тытса ĕçлени çинчен ыттисене каласа кăтартмалла, çакăн пек ĕçлекенсене пулăшса пымалла, — ыттисем те çаксенчен пример илччĕр. Предприятисем çумĕнче пахча-çимĕç туса илес тĕлĕшпе ятарласа хуçалăх тытма майсем пурри çинчен эпĕ кунта каламастăп та, мĕншĕн тесен çав хуçалăха организацилесен, ун урлă фабрикăсемпе заводсенчи столовăйсем валли кирлĕ çимĕçсем татах та хутшăнсах пынă пулĕччĕç тата рабочисем те хăйсем валли килте апатланмашкăн çимĕç туса илнĕ пулĕччĕç. Правительство çавнашкал мероприятисене туса иртерме сĕнет çеç мар, правительство тата çавсене пурнăçа кĕртме укçа-тенкĕ те парса пулăшать. Предприятисемпе учрежденисем çакăнпа усă курĕç тесе шанчăк пур.

Паллах ĕнтĕ, çуркуннехи уйхирти ĕçсене ăнăçлăн иртересси çынсенчен, колхозниксемпе колхозницăсенчен тата вĕсен руководителĕсенчен килет. Коллектив кар тăрса тата лайăх ĕçлессессĕн, вăрçă пирки килсе тухнă йывăрлăхсене çĕнтерме пулатех. Пирĕн агитаципе пропагандăн та çак ĕçре активлăн пулăшса пырас пулать.

Колхозри ĕçре хĕрарăмсем пирĕн яланах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Халĕ вăрçă вăхăтĕнче колхоз пурнăçĕнче хĕрарăм ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан татах та пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Коллективлăн ĕçлесси чи малтанах хĕрарăмсене лайăх организацисенинчен килет. Хĕрарăмсем ялта ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан вăй пулса тăраççĕ тетпĕр пулсассăн, çуркуннехи уйхир ĕçĕсенче, уйрăмах хĕрарăмсем хăйсем хутшăнакан ĕçсенче вĕсене лайăх организациленни ĕçе чăннипех те ăнăçлăн туса иртерме май парать.

Халăха пĕтĕм çулталăкĕпех тăранса пурăнмалăх çимĕçсем туса илесси вăл çуркуннехи уйхир ĕçĕсен ăнăçлăхĕнчен чылай килет. Ялхуçалăх продукчĕсене пирĕн халăха тăрантмалăх тата халăх хуçалăхĕ ыйтнине тивĕçтермелĕх кăна мар, ытларах та туса илмешкĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Юлташсем — колхозниксемпе колхозницăсем! Çуракине иртерес тĕлĕшпе пĕтĕм ĕçсене сирĕн тума лекет. Çуракине начар хатĕрленни, вăхăта усăсăр сая яни, акари ĕçсене çителĕксĕр туса пыни тырпул тухăçлăхне чакарать, — апла пулас пулсан, çакăн пирки ĕнтĕ сире хăвăрăн ĕçĕрсене тÿрĕ кăмăлпа туса пыман тесе калама пултарĕç. Анчах эпĕ ун пек пуласси çинчен пачах та шухăшламастăп. Хамăрăн тăван çĕршыва, хамăрăн Хĕрлĕ Çара пĕтĕм чĕререн юратса тăракан колхозниксемпе колхозницăсем мĕнпур вăйĕсене хурса ĕçлесе, кăçал нихăçанхинчен те вăйлă тырпул туса илессине эпĕ çирĕппĕн шанса тăратăп.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Февралĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противникăн хирĕç тăмалли вырăнĕсене сирсе пăрахса, малалла куçса пынă тата фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 27-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне персе антарнă, пирĕн зенитнăй артиллери 3 самолет персе ÿкернĕ тата противникăн аэродромĕсем çинче 20 самолет пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çав кун нимĕçсен 38 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 28-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 7 самолетне персе ÿкернĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн 5 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Февралĕн 27-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе груз сем турттарса пыракан 130 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 100 лавне, 18 орудине, 29 миномечне, 16 пулеметне, зенитнăй пулеметсен 2 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 2 складне, горючисен 2 складне тата тĕрлĕ япаласен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, бронепоезда сиенленĕ, противникăн кавалерине эскадрона çити тата пехотине батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Совет моряксемпе пехотинецĕсен отрячĕ çак кунсенче Азов тинĕсĕн çыранĕ хĕрринче противник йышăнса илнĕ пĕр участоксенчен пĕрин çине пырса тапăннă. Пирĕн боецсем çыран хĕррине систермесĕр пынă та тăшман çине кĕтмен çĕртен тапăнса артиллерин 2 батарейине, минометсен 2 батарейине, пулеметсен 2 точкине пĕтерсе тăкнă, вăйлă радиостанцие çĕмĕрнĕ, 12 çурта, унта кĕрсе ларнă гитлеровецсемпе пĕрлех, взрыв туса сирпĕнтернĕ, нимĕçсемпе румынсене 160 çынна ытла вĕлернĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Пирĕн пĕр подразделени (Калинин фрончĕ), нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пирĕн подразделени 4 кун хушшинчи çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна яхăн стройран кăларнă, противникăн 4 орудине, 124 автомашинине, 15 миномет, 27 пулемет, 1.500.000 ытла винтовка патронĕ, 4 радиостанци тата ытти çар хатĕрĕсемпе пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, малалла вăйлăн наступлени туса пырса, нимĕçсене çирĕплетнĕ чылай рубежсенчен çапса кăларнă, тăшманăнне 13 пулемет, 4 миномет, 160 винтовка, 127.000 патрон тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна вĕлернĕ.

* * *

Лейтенант Шматко юлташăн танк экипажĕ тăшманăн укреплениĕсем çине тапăннă вăхăтра противникăн салтакĕсене 80 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 3 ДЗОТ-не çĕмĕрнĕ, йăтăнса аннă ДЗОТсем айĕнче нимĕçсен вуншар автоматчикĕсем пĕтнĕ.

* * *

Красноармеец Козлов юлташ К. ялĕшĕн пынă çапăçура 10 нимĕç кĕрсе ларнă çурта пырса кĕнĕ. Козлов юлташ граната ывăтса 6 гитлеровеца сирпĕнтерсе янă, ыттисене тытăçса çапăçса вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 250-мĕш дивизийĕн 160-мĕш полкĕнчи 1-мĕш батальонран тыткăна илнĕ врач Ульрих Нойер çапла каласа панă: «Эпир декабрьпе январь уйăхĕсенче мĕн курса ирттерни пире питĕ тĕлĕнтерчĕ. Хĕрлĕ Çар пире çавăн пек вăйлăн пырса çапма пултарассине эпир нимĕн те кĕтмен. Вырăссем малалла куçма пуçласси ĕненмелле мар пекчĕ. Пирĕн чаçсем питĕ пысăк çухатусем тÿсреç. Ротăсенче 15 çынран пуçласа 30 çын таран анчах юлчĕç. Тăм илнипе стройран тухнисен шучĕ питĕ пысăк. Пĕр кун хушшинче кăна хамăн медицина пунктĕнче эпĕ вăйлă тăм илнĕ 20 салтака пăхса ятăм. Шăнса пăсăлса чирленисен шучĕ те ÿссех пырать. Полкра шатраллă тифпа чирленисем те пур. Барановичипе Брест-Литовск районĕсенче тăракан нимĕç войскисем хушшинче шатраллă тиф питĕ сарăлни çинчен манăн тĕрĕс даннăйсем пур. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем пăсăлса кайнă, вĕсем хăйсен пурнăçĕ çинчен çеç шутлаççĕ. Пирĕн войскăсем йĕркерен тухса çаратнине тата ялсене вут тивертсе çунтарнине эпĕ тунма пултараймастăп. Паллах, мирлĕ халăха хирĕç тискер ĕçсем тунăшăн салтаксен хăйсен те ответ тытмалла. Анчах та çаратусемшĕн, çынсене урамрах çарамаслантарнишĕн, вут тивертсе çунтарнишĕн нимĕçсен командованийĕ ытларах айăплă, мĕншĕн тесен çав тискерлĕхсем пĕтĕмпех командовани приказĕпе пулаççĕ».

* * *

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Бухара облаçĕнче 5.000 хĕр трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă. Вĕсем халĕ çĕрмамăк уйĕсенче ăнăçлă ĕçлеççĕ. Бухара облаçĕнчи пĕрремĕш МТС-ри Шамурадова юлташ механик пулса ĕçлекен хĕрарăмсен тракторнăй бригади çурхи сухана тунă çĕрте задание кашни кунах 200-шер процент тултарать, горючи нумай перекетлет.

Мартăн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Волынич юлташ командир пулса ертсе пыракан батарейăн артиллеристсем тăшман танкĕсен атакине сирсе, тÿррĕн тĕллесе персе, нимĕçсен виçĕ танкне пĕтерсе тăкнă. Çав кунах артиллеристсем противникăн минометсен батарейине аркатса тăкнă тата танксене хирĕç пемелли орудине персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем Дьяконов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенин позицийĕсене контратака тунă. Противник 100 метра çити çывхарса çитсен, пирĕн боецсем тÿрĕ тĕллесе пеме тытăннă. Гитлеровецсем çапăçу хирне 200 виле ытла пăрахса хăварса васкасах каялла чакнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр часть пĕр кун хушшинче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Тупăсенчен персе тата пирĕн разведчиксен уйрăм группиcем нимĕçсен 4 ДЗОТ-не, 5 блиндажĕпе землянкине çĕмĕрнĕ, полевой орудине, 7 станковăй тата ручной пулеметне, 3 наблюдательнăй пунктне тата боеприпассен складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр чаçри артиллерист-гвардеецсем халăх пурăнакан О. пункчĕшĕн пынă çапăçура нимĕçсен артиллерин икĕ батарейине тата минометсен 4 батарейине тусарса лартнă, противникăн танкне персе çĕмĕрнĕ, 2 ДЗОТ-не аркатнă. Тăшманăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи Н. тата Д. юлташсем командир пулса ертсе пыракан партизансен пĕрлешнĕ темиçе отрячĕ нимĕçсен ушкăнĕ çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Çапăçу вăхăтĕнче партизансем нимĕçсен хирĕç тăнă 20 салтакне персе вĕлернĕ тата 40 салтакĕпе пĕр офицерне тыткăна илнĕ. Отряд нимĕçсенне 7 пулемет, 5 автомат, 10 винтовка, 2 ещĕк граната, 16.000 патрон, 3 радиостанци тата продовольствипе обмундировани тиенĕ 64 лав тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 76-мĕш пехотнăй дивизийĕн 230-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ лейтенант Карл Вендель çапла каласа панă: «Вăрçă пуçланнăранпа 230-мĕш полкри офицерсен личнăй составĕ 60 процента çити пĕтрĕ. Хăшпĕр ротăсенче халĕ командирсем вырăнне фельдфебельсем ĕçлеççĕ. Дивизире запасри офицерсем ытларах. Вĕсенчен нумайĕшне çар службин йăлăхтарса çитернĕ. Офицерсем ывăнса çитни çинчен тата хăйсене улăштарасси çинчен калаççĕ».

* * *

Нимĕçсен 60-мĕш танковăй батальонĕн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-фельдфебель Шульц Гейнц çапла каласа панă: «14-мĕш танковăй дивизин Ростов патĕнчен каялла чакнă хыççăн 132 танкран 30 танк анчах юлнă, вĕсенчен 15 танкĕ юсавлă мар. Ун хыççăн çĕнĕ вăй илсе 33 танкран тăракан батальон турĕç. Малтанхи çапăçурах пирĕн 15 танк пĕтрĕ».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Потапово ялĕнче пурăнакансем Хĕрлĕ Çар представителĕсемпе пĕрле гитлерла мерзавецсен тискер ĕçĕсем çинчен акт çырнă. Акта çапла каланă: «Хĕрлĕ Çар хĕснипе каялла чакнă чух нимĕçсем Дорохи тата Потапово ялĕнчи 47 çынна 2 çуртра хăваласа пухнă та çуртне питĕрсе лартнă, çуртсене айне нумай вăхăт иртсен тин çурăлакан минăсем хурса хăварнă. Çуртсене питĕрсе лартнă çĕрте çаксем пулнă: Гранин çемьинчи 4 çын, Желтова çемьинчи 3 çын, М. П. Кузнецовăпа ывăлĕ, Е. Е. Киселев, А. Е. Федорова, А. М. Горькова, А. Л. Гринина, Кузин çемьинчи 5 çын, Фадеев çемьинчи 10 çын, Федоров, Афонин, Курлин, Иванов çемьисем. Минăсем хунă хыççăн темиçе сехетрен икĕ çурчĕ те сирпĕнсе кайнă. Унта пулнă старикссем, хĕрарăмсем тата ача-пăчасем пурĕ 47 çын пурте пĕтнĕ. Çакăн пек тискер ĕç тунă хыççăн гитлеровецсем яла вут тивертнĕ те 41 çурта çунтарса янă». Акт çине Д. И. Лисиков, М. Я. Фомичева, У. Р. Волчкова, А. Г. Рогаткина, Т. В. Фомичева, А. Г. Волчкова, Д. Г. Бондарчук тата старши лейтенант М. И. Савченко алă пуснă.

* * *

Новокузнецкри вагонсен деповĕнчи слесарьсем Кореневпа Ключагин юлташсем производствăра паха ситĕнÿ тунă. Вĕсем пĕр вагона норма тăрăх 72 сехет хушши юсас вырăнне 8 сехетре юсаса пĕтернĕ.

Мартăн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 1-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сире-сире пăрахса тата унăн контратакисене çапса аркатса, фронтăн хăшпĕр участокĕсенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 27-мĕшĕнче нимĕçсенне, малтан пĕлтернĕ пек 38 самолет мар, 47 самолет пĕтерсе тăкнă.

Февралĕн 28-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 34 самолетне персе антарнă; пирĕн зенитнăй артиллери пĕр самолет персе ÿкернĕ тата тăшманăн аэродромĕсем çинче 33 самолет пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çав кун нимĕçсен 68 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 14 самолет пĕтнĕ.

Мартăн 1-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 2 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Февралĕн 28-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 12 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 410 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 280 лавне ытла, горючи тултарнă 5 автоцистернине тата чугунçул çинчи 7 цистернине, 26 орудине, зенитнăй пулеметсен 8 точкине, 7 минометне, 18 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 58 вагона, 2 паровоза çĕмĕрнĕ, чугунçул çинчи пĕр эшелона сиенленĕ, противник кавалерине эскадрона çити тата пехотине 3 батальон ытла сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Юрченко юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри танкистсем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) кавалери чаçĕпе пĕрлешсе çапăçса пĕр кун хушшинче нимĕçсенне 7 оруди, 4 миномет пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем нумай тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 650 çынна вĕлернĕ.

* * *

Халăх пурăнакан К. пунктшăн пынă çапăçура Вознесенский юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени (Калинин фрончĕ) нимĕçсен чаçне пуçĕпех çапса аркатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 360 вилли выртса юлнă. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 10 çын тыткăна парăннă. Подразделени трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Лейтенант Лисовец юлташăн йывăр танкĕ противник вырнаçнă вырăна пырса кĕнĕ те тупăсенчен персе тата гусеницăсемпе таптаса нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, танксене хирĕç пемелли 2 орудине, 4 минометне, пулеметсен 4 точкине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен продовольстви тиенĕ обозне аркатнă.

* * *

Ерешев юлташ ертсе пыракан 6 красноармеец-разведчик тăшманăн дозорне хирĕç çапăçма тытăннă. Ерешев юлташ çак çапăçура пĕр офицера тата 3 салтака вĕлернĕ. 10 нимĕç тыткăна парăннă.

* * *

Карело-финн партизанĕсен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ белофиннсен вăрман витĕр иртсе пыракан мотомеханизированнăй колонни çине тапăннă. Партизансем гранатăсен çыххисене ывăтса тăшманăн 2 танкне çĕмĕрнĕ тата вĕсен экипажĕсене вĕлерсе пĕтернĕ. Финсен пехоти çине автоматсемпе пулеметсенчен пенĕ. Финсен пехоти юр çине хăйсен салтакĕсен виллисене нумай пăрахса хăварса тарса сапаланса пĕтнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи Дзержински районри Гребнево ялĕнчен тухса кайнă чух нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем тыткăна илнĕ аманнă красноармеецсен группине персе вĕлерсе хăварнă.

* * *

Нимĕçсен промышленноçĕ валли пăхăр çитменни паллă. Пăхăра тата пăхăртан тунă укçасене пухас тĕлĕшпе

Вĕçĕ 4-мĕш страницăра

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Тăватă герой

Октябрь уйăхĕнчи тĕвеллĕ кун Мускав патĕнчи аэродромсенчен пĕринче летчиксемпе техниксем эскадрилья командирĕ лейтенант Георгий Невкипелый таврăнассине кĕтнĕ. Хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле вăл тăшманăн Нара юханшывĕ урлă каçмалли вырăнне çĕмĕрме кайнă. Нимĕçсем юханшыв урлă каçма шутланă. Командовани Невкипелыя тăшманăн кĕперне çĕмĕрсе вĕсен наступлени тума пухнă танкĕсемпе мотопехотине аркатса тăкма хушнă.

Н. пункчĕ патне лейтенант икĕ хутчен вĕçнĕ. Аялтанах вĕçсе, вăл фашистсем çине тапăннă, вĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Юлташĕсем ăна тăшмансен юханшыв урлă каçмалли кĕперне çĕмĕрсе тăкни çинчен икĕ хутчен те пĕлтерни. Анчах Невкипелый тăшмана тĕппипех çĕмĕрсе тăкма шутланă. Акă вăл юлашки походран таврăнман. Вăл таврăнманнине кура унăн юлташĕсем пăлханма пуçланă. Часть командирĕ подполковник Витрук кăна пăлханман. «Невкипелый епле пулсан та таврăнать», тенĕ вăл.

Хĕвел те анса ларма пуçланă. Механиксем моторсене тĕрĕслесе пĕтерни, Невкипелый çаплах таврăнман.

Çывăхри вăрман тăрринче хытă вĕçекен виçĕ штурмовик курăнсанах пурте савăнсах кайнă. Вĕсем пĕр хут çавăрăнса илнĕ те виççĕшĕ те юнашар анса ларнă. Кабинкăран чи малтан лейтенант Невкипелый тухнă. Вăл çийĕнчех подполковник Витрук патне пынă та çапла пĕлтернĕ: «Командир юлташ! Малтанхи кĕперпе юнашарах тăшманăн тепĕр кĕперне тупрăмăр. Ăна та çĕмĕртĕмĕр. Хамăрпа илнĕ пур бомбăсене те нимĕçсен çарĕ çине пăрахрăмăр».

Невкипелый урăх нимĕн те каламан. Вара унăн юлташĕсем каласа панă тăрăх кăна эпир вăл тăшман кĕперне 40 минута хушши шырани çинчен, унăн самолетне темиçе çĕртен персе шăтарни çинчен, хăйĕн бомбисене пăрахса пĕтериччен вăл каялла вĕçсе килме те шутламанни çинчен пĕлтĕмĕр.

Мускава хӳтĕленĕ чухне лейтенант Невкипелый тăшмана çĕмĕрме пурĕ 46 хут вĕçсе тухнă. Çак хушăра вăл тăшманăн 37 танк, 122 автомашина, 9 оруди, 6 самолет, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 450 çынна пĕтерсе тăкнă.

Подполковник Витрук тăшмана çĕмĕрме пурĕ 21 хут вĕçсе тухнă, унăн паçĕ фашистсене 280 танк, 1.127 автомашина пĕтерсе тăкнă, нимĕç оккупанчĕсене 800 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Çак мухтавлă икĕ летчика ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Указĕ тăрăх Совет Союзĕн Геройĕн званине панă.

Совет Союзĕн Геройĕ, аслă лейтенант Александр Лепилин сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ. Лепилин пĕр пĕччен тăшманăн пилĕк самолетне хирĕç çапăçса вĕсене çĕнтернĕ.

Аслă лейтенант Иван Чулков вăрçă пуçланнă малтанхи кунах тăшманăн икĕ самолетне çапса антарнă. Çакăн хыççăн вăл тăшманăн татах 9 самолет çапса антарнă. Вăл тăшман самолечĕсене хирĕç кăнтăрла та, çĕрле те хастарлăн çапăçать. Пĕрре кĕтмен çĕртенех пирĕн аэродром çине тăшман бомбардировщикĕсем вĕçсе килсен, сывлăшпа Чулковпа Лепилин кăна вĕçсе хăпарнă. Вĕсем иккĕшех тăшманăн темиçе самолетне хирĕç çапăçса вĕсене хăвалаcа янă.

(«Правда», февралĕн 25-мĕш).

Çĕнтерӳллĕ вилĕм

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 25-мĕш. (ТАСС). Часть командирĕ Василий Служиникин летчика хăй патне чĕнсе илнĕ те каланă:

— Н-ски аэродром çинче тăшман самолечĕсем нумаййăн пухăнса тулнă. Вĕсене аркатса тăкас пулать,—тенĕ.

— Вĕсене аркатса тăкатпăр! — тесе ответленĕ Служиникин. Хăйĕн пилĕк юлташĕпе пĕрле Служиникин тăшман аэродромне çĕмĕрме хĕвеланăçнелле вĕçсе кайнă. Акă вĕсем тĕллев çине вĕçсе те çитнĕ. Малтанхи бомбăсене пăрахсанах тăшманăн самолечĕсемпе ангарĕсене вут хыпса илнĕ. Вĕсем кĕрлесе çунма пуçланă. Трук Служиникин самолетне темскер пырса çапса кисретсе янă. Тăшман снарячĕ самолет моторне пырса тивнĕ. Самолета вут хыпса илнĕ. Вут хыпса илнĕ самолет тăшман аэродромĕ çине анса лармалла пек туйăннă. Анчах ун пек çын мар сталинла сокол—Василий Служиникин, вăл нихçан та тăшман аллине парăнас çук. Вăл юлашки вăйне пухса самолетне пĕр секундăлăха çӳлелле хăпартнă та çĕр çинче сиенленмесĕр юлнă тăшман самолечĕсем — юнкерссемпе мессершмиттсем ларнине курах кайнă. Вара Служиникин хăйĕн ялкăшса çунакан самолетне тӳрех тăшман самолечĕсен ушкăнĕ çине тытнă. Вăйлă взрыв сывлăша чĕтретсе янă. Нимĕç самолечĕсен ванчăкĕсем çӳлелле сирпĕнсе аркаса кайнă. Çавăн пек паттăрла ĕç тунă Василий Служиникин. Унăн ĕçĕсем те чаплă, вилĕмĕ те çĕнтерӳллĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ). **Ӳкерчĕк çинче:** Н-ски часть разведчикĕсем халăх пурăнакан В. пунктра разведка тăваççĕ.
Е. КОПЫТА фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Паттăрсен шкулĕ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. Вăрçăччен вăл халăха çутта кăларас ĕçре инспектор пулса ĕçленĕ. Кĕнеке унăн пĕртен-пĕр хĕçпăшал пулнă. Çавтери ырă çын!» — тенĕ ун çинчен ачасем. Учительсем унпа вĕренӳре кая юлса пыракан ачасене мĕнле воспитани парасси çинчен калаçнă. Вăл вĕсене çапла каланă: «Ăмăртса ĕçлеме хăнăхтарăр, чăтăмлă пулма, ĕçе юратса ĕçлеме вĕрентĕр», — тенĕ. Каçсенче вăл хăйĕн пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Пĕр стакан çăра чей, Ленинпа Сталин çырнă томсем, конспектсем, лампа. Лампине, çывăракан çынсене чăрмантарас мар тесе, хаçатпа хупăрланă.

1941 çулта çулла тăван çĕршыв ăна тепĕр шкула, паттăрсен шкулне ăсатнă. Ку ĕнтĕ вăрçă, фронт пулнă. Пирĕн войскăсем нимĕçсене кашни высота, кашни юханшыв патĕнче чарса тăра-тăра, каялла чакса пынă. Анчах та çапла чакса пыни эпир пĕтессе мар, эпир çĕнтерессе кĕтартса тăнă. Вăл нимĕç бомбардировщикĕсем тивертсе хăварнă ялкăшса çунакан хуласене, çуртйĕрсĕр тăрса юлнă çынсен ушкăнĕсене курнă. Вăл ачасене чăтăмлă пулма вĕрентнĕ, халĕ ĕнтĕ ăна хăйне çав чăтăмлăх вунă хут ытларах кирлĕ пулнă. Халăха çутта кăларас ĕçри инспектор Александр Бараев взвод командирĕ пулса тăнă.

Искусствăпа пĕлӳсĕр пуçне, вăрçăра опыт кирлĕ. Бараева тата çав Бараев пеккисене хирĕç Германи çарĕн офицерĕсем, çын вĕлерме хăнăхнă вăрă-хурахсем, хăйсене хăйсем Польшăна, Норвегие, Францие, Грецие, Югославие, пĕтĕм Европăна çĕнтерттерĕр текен генералсем вăрçăпа килнĕ. Вĕсем Мускав çинелле тапăннă. Чи йывăр вăхăтра фронтăн пĕр участокĕнче пирĕн боецсен пĕчĕк группи нимĕçсен вуншар танкĕсене хирĕç çапăçнă. Кăвак пĕлĕтре «Юнкерссен» моторĕсем кĕрленĕ, çӳлтен бомбăсем çуса тăнă, çĕр хăй çийĕнчен çынсене ывăта-ывăта ярса, çӳлелле çĕкленнĕ. Сывă юлнисем çапах каялла чакман. Вара нимĕçсем вырăс салтакĕ, совет боецĕ мĕнлине ăванах туйса илнĕ. Бараев çак участокра пулнă.

Корсаковка патĕнче икĕ кун хаяррăн çапăçнă хыççăн, Черничная патĕнче икĕ кун пулнă хыççăн нимĕçсем Лукьянтино çывăхĕнче хура вĕтлĕхе шăтарса кĕрсе каяççĕ. Ĕнтĕ çавăн пек вăхăт та çитет, штабран телефонпа çакăн пек те пĕлтереççĕ: «Юлашки вăйсене пухăр, тытăнса тăрăр». Вара оборонăна пекарьсем, обозрисем тухаççĕ. Вĕсем Европăна çĕнтерекенсемпе çапăçаççĕ, вĕсене 24 сехет хушши чăнкă çыран хĕрринче чарса тăраççĕ. Каçхине пулăшу килсе çитет. Çак участокра Александр Бараев та пулать. Батальон командирĕ стройран тухсан, вăл, халăха çутта кăларас ĕçре инспектор пулнăскер, пĕтĕм вăйран кăшкăрса ярать: «Ман командăна итлĕр!» Вăл хăй лаша çинче ларнă; унăн сăнĕ паттăррăн курăннă. Паттăрсен шкулĕ, вăрçă шкулĕ ăна командир тунă. «Европăна çĕнтерекенсен» кунта та, фронтăн ытти участокĕсенчи пекех, чăн-чăн этемсене тĕл пулма лекнĕ.

Вăрçăччен учитель пулса ĕçленĕ çынна генерал-майор асăрхать. Генерал ăна çапла приказ парать: «Вĕтлĕхрен нимĕçсене хăваласа кăларăр, Черничнаяна хăвăр йышăнса илĕр, вара батальон сирĕнех пулĕ». — «Хăвалатăп, йышăнатăп», — тесе тавăрать ăна хирĕç Бараев. 120 боец вăйĕпе вăл нимĕçсен 3 ротине каялла чактарать, çапăçу хирĕнче 300 нимĕç салтакне вĕлерсе, вĕтлĕхе тухать, Черничнаяна çитет; çапла вара батальон ун аллинех юлать. «Халĕ ĕнтĕ эпĕ сисрĕм, ĕç мĕнлине туйрăм. Йывăртарах, анчах тума пулатех. Гансене çапса аркатăпăр»,—тет вăл.

Малтанласах вăл хăюллă пулать, вăл нимĕнле хăрушлăхран та хăрамасть, пульăсене хирĕç хăй ыткăнать. Çĕнтерессе те çавăнпа çеç çĕнтерет вăл. Ăна вăрçаççĕ, «батальон хамăн — пĕрлех каятăп», — тесе çеç тавăрать вăл. Ку ĕнтĕ паттăрсен шкулĕн пуçламĕш класĕнче чухне пулнă. Каярахпа вăрçă ăна пачах урăххине вĕрентнĕ. Вăл асăрханма тытăнать, мĕн кирлине çеç тума хăнăхать. Çĕнтерĕвĕн йывăр искусствине тĕпчесе вĕренет, тăшмана ултала-ма, ăна вăйпа çеç мар тата чеелĕхпе те, ăспа та çĕнтерме вĕренсе çитет. Пулас операцисене вăл математика задачисене тунă пек сӳтсе-явма тытăнать, каллех çĕрĕ-çĕрĕпе кĕнекесем, уставсем çинче ларать, хальхинче вăл кĕнекесем ĕнтĕ—вăрçă çинчен калакан кĕнекесем пулаççĕ. Бараев вăрçăн пысăк хуçалăхĕпе пĕтĕмпех паллашса çитет. Дивизире унăн батальонне паттăрсен, хăюллисен батальонĕ тесе шутлаççĕ. Унăнни пек лайăх, меллĕ блиндажсем пĕтĕм позицийĕпе те çук мĕн. Çĕр айĕнчи çулсене тума Бараевран вĕреннĕ. Вăл пысăк опыт туяннă, çав вăхăтрах хăйĕн чăрсăрлăхне, хăюллăхне те çухатман. Унăн батальонĕ яланах малта пынă. Вăл тăшмана çавăрса илес маневрăн мастерĕ пулнă, вăл ятарласа гансене шăнтса тăма тумалли отрядсем йĕркеленĕ, нимĕçсене хăйсен тылĕнчех хĕненĕ. Ăна тепĕр командирпа хăйĕн çывăх тусĕпе танлаштараççĕ. Лешĕн тытса чарайми хăюлăх пулнă, анчах та вăл чееленме, малтанах виçсе хума хăнăхман.

Вăл вилнишĕн Бараевăн халĕ те-ха хуйхă пусăранаймасть. Нимĕçсен вăйлă ДЗОТ-ĕ çине атака тунă чухне унăн тусĕ танк çине сиксе улăхнă та башня çине утланса ларнă, вăл оруди çине те утланасшăн пулнă та, анчах çавăнтах хăй шухăшне пăрахнă, çăвар тулли кулса илнĕ те вăл кăшкăрса янă: «Малалла! Хăюллинчен пуля та пăрăнать!» Хăй тусĕн виллине оборонăн малти хĕрринчен илсе тухас тесе пилĕк ир те пилĕк каç çапăçнă Бараев, илсе тухнă-тухнах, анчах та халь те манаймасть-ха, хуйхăллăн калать: «Хăюллă пулас пулсан та, ăсла пулас пулать», тет.

Оборонăран наступление куçсан, Бараев чи малтан нимĕçсен вăйсăр вырăнне шыраса тупать, йĕп çăрти пек хĕсĕк вырăнтанах нимĕçсен тылне пырса тухать, хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнсене хысала хăварать. Çак участокра вара нимĕçсен оборони арканса, пĕтĕмпех сапаланса каять. Юрлă уй урлă, вăрман урлă каçса вăрăм çула кĕскетеççĕ. Бараев батальонĕ чакма тытăннă нимĕçсене çавăрса илет. Вара «Европăна çĕнтерекенсем», Фермопил геройĕсем, нимĕç штабĕнчи хурахсем, пысăк квалификациллĕ пуçкасакансем Бараев ятне илтеççĕ. Вĕсене ĕнер учитель пулса ĕçленĕ çын, Хĕрлĕ Çарăн аслă шкулĕнче, чăтăмлăхпа паттăрлăх шкулĕнче вĕренекенсенчен пĕри хăваласа пырать.

ЕВГЕНИЙ КРИГЕР.
(«Известия», февралĕн 27-мĕш).

Тăшмана вăйлăнрах та вăйлăнрах аркатаççĕ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, февралĕн 28-мĕш (ТАСС спецкорĕ). Н-ски часть нимĕçсен пĕр пехотнăй полкне, сапернăй батальонне тата противотанковăй орудисен дивизионне çĕмĕрсе тăкса, пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 6 пункта фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларнă. Хĕрлĕ воинсем пыра-пыра çапнине тӳсеймесĕр каялла чакакан нимĕçсем хăйсен хĕçпăшалне, çар пурлăхĕсене пăрахсах тараççĕ. Н. ялĕшĕн пынă çапăçăва кăна шутласан та, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна яхăн вĕлерсе тăкнă, çакăн пек трофейăсем: 4 оруди, 32 пулемет, 200 винтовка, 30.000 патрон тытса илнĕ.

Богатов сержант командир пулса ертсе пыракан миномётчиксен группи шоссе çинче засадăра тăнă. Шоссе тăрăх нимĕç пехотин колонни тата обозĕ пынă. Миномётчиксем çаксем çине вăйлăн пеме тытăннă. Шоссе çинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем пĕр ротăна яхăн вилсе юлнă.

Отделени командирĕ Зуев ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ нимĕçсем тăракан яла пырса кĕнĕ. Нимĕçсем пирĕн разведчиксене асăрханă та вĕсем çине питĕ вăйлăн пеме тытăннă. Разведчиксем тăшман пуçласа янă çапăçăва йышăннă. Хăюллă паттăрсем 4 сехет хушши противникăн хаяр атакисене сире-сире пынă. Пултарулла боецсене пулăшма пирĕн пĕр подразделенийĕ янă. Çав подразделени тăвăл пек атака пуçласа ярса, фашистсене ялтан хăваласа кăларнă.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Вăрманти çапăçу

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Ку вăл Старая Русса районĕнче, пирĕн войскăсем çавăрса илнĕ нимĕçсен 16-мĕш армин чаçĕнчен пĕрине хирĕç пынă çапăçура пулса иртнĕ. Пирĕн подразделени наступлени тума хатĕрленнĕ. Красноармеецсем боевой задачăна лайăхрах пурнăçа кĕртессишĕн пĕр-пĕрнипе ăмăртăва тухма шут тытнă.

Çапăçăва кĕмелли позици патнелле боецсем çĕрле вăрман витĕр пилĕк таран юр тăрăх утса пынă. Хыçра пекĕ сасăсем, сайра хутра пулеметсенчен шатăртаттарнисем илтĕннĕ. Аста маневр туса, пирĕн подразделени нимĕçсен оборонинчен тавра çавăрăнса кайнă та тăшманăн тылне пырса кĕнĕ. Акă боецсем çул çине тухаççĕ. Касаткин лейтенант боецсене пысăк мар ушкăнсемпе вăрман хĕррине вырнаçтарать, Буслов автоматчика вăл çул хĕрринех пытанса выртма хушать.

Умра инçех те мар кăшт палăракан тепĕр çул авкаланса выртнă. Ун тăрăх нимĕçсен машинисем куçкаланă. Бусловăн вĕсене автоматран халех çунтарса илес килнĕ, анчах вăл командир сигнал парассине чăтăмлăн кĕтсе выртнă. Инçех те мар урасем айĕнче юр качăртатни, ют чĕлхепе калаçни илтĕнсе кайнă. Красноармеец хăйĕн гранатипе автоматне хатĕрлесе хунă.

Нимĕç салтакĕсен колонни сывхарса килнĕ. Çавăнтах командир пăрахнă граната вăйлăн шартлатса çурăлса кайнă. Буслов ура çине тăнă та нимĕçсем чи нумай пухăнса тăнă çĕре икĕ граната вăркăнтарнă, унтан автоматне тытса тăшманăн салтакĕсене çавапа çулнă пек çулма тытăннă. Вăрман çывăхĕнчи çул çинче тăшман салтакĕсен темиçе вуншар вилли выртса юлнă.

Ирхине нимĕçсем татах контратака тума хăтланнă. Командир Буслова противникăн пулеметне пĕтерсе тăкма приказ панă. Пирĕн хăюллă автоматчик, неприятелĕн огневой позицийĕ патне шăвăнса пынă та тӳррĕн тĕллесе персе, тăшман пулемсчĕн расчетне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Çапла кашни боец, Буслов пекех, çапăçура хастар та паттăр, тавçăрулла та чее пулса, тăшманăн контратакине сирсе пăрахнă.

Çапăçу хыççăн, боевой ăмăртăвăн итогĕсене пĕтĕçтернĕ май, командир Буслов автоматчикăн тĕллемелле хастарлăхĕпе паттăрлăхне палăртнă.

Старши лейтенант М. РЯБЧЕНКО.

Хăюллă сержант

...Январь уйăхĕ. Шартлама сивĕ шăнкăтăр енче хĕвел кăшт çĕкленнĕ те катаран-катаран хăйĕн тулăх çуттине пирĕн çине та яма тăрăшать. Анчах та унăн ăшши çак хĕллехи кунсенче пирĕн патăмăра сахал çитет.

— Сивĕ ĕнтĕ 53 градус таран,—теççĕ пире. Пирĕн тăра, çак сивве пăхмасăрах, виçе çула лашапа каймалла.

Акă ĕнтĕ эпир çул çинче. Пĕтĕм сывлăша сивĕ тĕтри пусса илнĕ. Пирĕн подразделени пĕр пысăк юханшыв тăрăх хăйĕн палăртнă маршручĕпе пырать. Лавсем çине тĕрлĕ хатĕрсем, апат-çимĕçсем тиенĕ. Колонна хыçĕнче лашасем валли утă-сĕлĕ тиенĕ лавсем пыраççĕ.

Пĕр красноармеец ман пата юланутпа вĕçтерсе пырать те:

— Политрук юлташ, Козлов красноармеецăн лашисем шыва путаççĕ...—тесе пĕлтерет.

Эпĕ хамăн утăма хăвăрт çавăратăп та каялла сиккипе чуптаратăп.

Эпĕ çитнĕ çĕре Козлова пулăшма тата виçĕ юлташ пынă.

— Хăрамалли çук!—тет украина çынни Кириенко.

— Ухмах, ку лашасене халех ăшă витене илсе каяс пулать...—тесе вĕрентсе калать тутар Сапаргали.

— Айтăр, яла кайса ăшăтар! Айтăр! —тет сержант Швалов.

Сержантăн шинелĕ тăрăх шапăртатса шыв юхать. Тумламсем çавăнтах пăр пулаççĕ. Кăвак шинел, çăматă шăнса хуп пек пулаççĕ.

Çавăнтах, çул çинче, хайхи икĕ лаша чĕтресе тăрать. Иккĕшĕ те йĕппĕпе.

— Сержант юлташ, Сапаргалипе пĕрле лашасене илĕр те халех яла вĕçтерĕр. Вĕсене ăшă витене тăратăр. Шăлса типĕтĕр. Сĕлĕ, утă парăр,—тетĕп.

— Юрать!—теççĕ те икĕ юлташ, пысăк юханшыв хĕрринче курăнми пытанса ларакан ялалла чуптараççĕ.

..Ку ĕç малтан мĕнле пулса иртнине каласа парам. Козлов красноармеецăн лашисем çулран кăшт айккалла пăрăннă мĕн. Пăрăннă-пăрăнманах пăр çĕмĕрĕлсе кайнă та лава кӳлнĕ лашасем иккĕшĕ те пĕр самантра шыва путнă. Çав хушăрах çак вырăна сержант Швалов чупса çитнĕ. Вăл, çар лашисене çăлас тесе, тӳрех пăрлă шыва кĕрсе кайнă. Çапла вара, калама çук сивĕ кун, питех те сивĕ шывра, хăюллă сержант икĕ лашана тăварнă, лашасем вара çăмăллăнах шывран сиксе тухнă.

Тепĕр талăкран сержант Швалов пире чиперех хуса çитрĕ.

Çак ĕç сержантăн хастар хăюлăхĕ çинчен калать. Эпир ун пек хăюллă юлташсене Хĕрлĕ Çар ретĕнче кашни кунах куратпăр.

Ирсĕр фашизма çĕмĕрсе тăкас ĕçре çапла тăрăшаççĕ хăюллă халăхăн хăюллă ывăлĕсем.

Политрук В. ДОЛГОВ (Хударсем).

Партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

1942 çулти февралĕн 28-мĕшĕпе мартăн 1-мĕшĕнче партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Актив ВКП(б) Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕн итогĕсем çинчен сӳтсе-яврĕ. Çак ыйтупа ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ **М. Романова** юлташ доклад туса пачĕ.

Хулари парторганизаци Сталин юлташăн выступленийĕсене ĕççыннисене ăнлантарса парас ĕçе кулленех туса пынă. Çакă вара ĕççыннисен политикăллă тата производствăри активлăхне вăйлатнă. Сталин юлташăн сăмахĕсемпе хавхаланнă рабочисем, колхозниксем тата интеллигентсем фронт валли, çĕршыв валли ытларах та ытларах продукци туса кăларас, Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшса тăрас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçленĕ.

Хула ĕççыннийĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсемпе япаласем парас ĕçе активлăн хутшăннă. 1941 çулта кăна хулара пĕтĕмпе ăшă жилетсем 167, çăматăсем — 826 мăшăр, перчаткăсем — 1079 мăшăр, тăлăпсем — 20, кĕске кĕрĕксем — 115, свитерсем — 709, мулаххайсем — 2221 пухнă. Ăшă тумтирсем пухас ĕç малалла пырать. Çĕнĕ çултан вара пĕтĕмпе 5916 япала, вăл шутран: ăшă жилетсем 100, çăматăсем 560 мăшăр тата ытти япаласем пухăннă. Хулари халăх çĕршыв оборонин фондне пĕтĕмпе 1.355.400 тенкĕ укçа, 84 грамм ылттăн, 4936 грамм кĕмĕл, 1.089.000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, 10 центнер тырă, 124 килограмм аш-какай, 119 литр сĕт тата ытти те панă. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 110.500 тенкĕ пухăннă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли йĕлтĕрсем илме укçа тупас тесе ĕççыннисем воскресниксенче активлăн ĕçлерĕç. Çав воскресниксенче пĕтĕмпе 40 пин тенкĕлĕх ытла ĕçленĕ.

Хулари чылай предприятисем (Милютински мехлесопункт, çăкăр пĕçерекен комбинат) 1941 çулти производство планне ăнăçлăн тултарнă. Куçса килнĕ уйрăм предприятисен оборудованийĕсене кĕске вăхăт хушшинчех вырнаçтарса лартса çитерсе вĕсене ĕçе янă. Çавăнпа пĕрлех хулари предприятисен ĕçĕсенче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Пĕтĕмĕшпе илсен, хулари промышленность çителĕксĕр ĕçлет. Уйрăмăнах тир-сăран комбиначĕпе стройтрест япăх ĕçлеççĕ. Тир-сăран комбинатĕнчи парторганизаци производствăпа сахал интересленнĕ, предприятири çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерес, кивелнĕ оборудованисене вăхăтра çĕнетес ыйтусене рабочисен коллективĕ умне çивĕччĕн кăларса тăратман. Çавна пула комбинат производство планне пурнăçа кĕртеймен. Шупашкарти стройтрестăн директорĕ Стешов юлташ трест умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ответлăха туймасть. Пурăнмалли çуртйĕрсем тăвасси ытла та вăраххăн пулса пырать. Йĕлтĕрсем тума панă задание трест пурнăçа кĕртеймен.

Уйрăм предприятисенче çаплах оборудованисемпе туллин усă курмаççĕ-ха, чĕртавара тата электроэнергие перекетлени çук, топливо вăхăтра хатĕрлемеççĕ. Уйрăм предприятисем васкавлă заказсене те вăхăтра туса параймаççĕ. Вырăнти ресурссемпе сахал усă кураççĕ. Хулари предприятисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене çине тăрса пĕтерсе пырас пулать. Партин пуçламĕш организацийĕсен рабочисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатмалла. Социализмла ăмăртса ĕçлессине анлăн сарса, оборудованисемпе туллин усă курса, чĕртаварсене перекетлĕн расходласа, предприятисен коллективĕсен производство планĕсене вăхăтра тултарас пулать. Фронт ыйтнисене вăхăтра парса тăмалла. Çакă вара васкавлă заказсене пурнăçа кĕртес енĕпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хушать.

Хула территоринчи колхозсем иртнĕ çулти ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ, государствăна тырпул тăратас обязательствăсене тултарнă. Анчах çитес çуракине хатĕрленес ĕç — машинăсене юсас, вăрлăхсене сортласа хатĕрлес, тислĕк кăларас ĕç — вăраххăн пулса пырать.

Ĕççыннисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе тăтăшах туса пыни партипе массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетрĕ. Çĕршывăн чи лайăх çыннисем хăйсен кунçулне парти пурнăçĕпе çыхăнтараççĕ. 1941 çулта хулари парторганизаци ВКП(б) членне 73 çынна, ВКП(б) членĕн кандидатне 34 çынна илнĕ. Çав вăхăтрах уйрăм парторганизацисенче ВКП(б) ретне çĕнĕ членсем илес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Çавăнпа та беспартийнăй актив хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатмалла.

Доклад тăрăх тухса калакансем пурте Сталин юлташăн доклачĕ ĕççыннисене лайăхрах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарни çинчен каларĕç тата ĕçри çитменлĕхсем çинче чарăнса тăчĕç.

— Пирĕн пуçламĕш парторганизаци агитациллĕ-массăллă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе тачăн çыхăнтарса туса пычĕ, çавна пула мехлесопункт 1941 çулти производство планне ирттерсе тултарчĕ, — терĕ **Селезнев** юлташ, Милютински мехлесопунктран. —Рабочисем чылайĕшĕ ĕç нормисене 200-шер процент тултараççĕ, пирĕн мехлесопунктра халĕ ĕç нормине тултармасăр ĕçлекен рабочисем пачах çук.

Çавăнпа пĕрлех Селезнев юлташ вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ тата лавсем сахал пыни, столовăйсемпе ресторансен Шупашкарти тресчĕн управляющийĕ Герасин юлташ ушкăнпа апатланас ĕçе йĕркелесе яма тăрăшмани çинчен калать.

«Росглаввино» совхозĕн директорĕ **Кальнов** юлташ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе совхозра мĕнле ĕçлени çинчен каларĕ. Совхозран Хĕрлĕ Çар ретне кайнă арçынсем вырăнне тăнă хĕрарăмсем лайăх ĕçленине палăртрĕ.

Хула Совет исполкомĕн председателĕ **Золотников** юлташ хула валли вутă хатĕрлесси çителĕксĕр пулса пыни çинчен калать. Çурхи шывсем тапраниччен предприятисемпе учрежденисем валли вутă запас турттарса хатĕрлеме кирлине, ку енĕпе Шупашкар леспромхозĕ çителĕксĕр ĕçленине кăтартса парать. Хулана тасамарлăхсенчен тасатас, санитарине пăхăнас ыйту çинче чарăнса тăрать.

Логинов (пир-авăр фабрики) тата **Шишов** юлташсем вĕсем ертсе пыракан предприятисенчи рабочисем производствăра тăрăшса ĕçленине палăртса, ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсем çинче чарăнса тăчĕç. Çав йывăрлăхсене сирсе яма партин хула комитечĕн ытларах пулăшса пыма кирли çинчен каларĕç.

ВКП(б) хула комитечĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ **Чурбанов** юлташ хăйĕн сăмахĕнче хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем оборона ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени çинчен каларĕ. Хальхи вăхăтра кашни гражданинăн çар специальноçне туянма тăрăшас пулать. Милютински тата чугунçул çинчи вĕренӳ пункчĕсенче çар ĕçне отлично вĕренекенсем йышлăн пулчĕç. Анчах хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем (типографи, аптекоуправлени) хăйсен предприятийĕсемпе учрежденийĕсенче çар ĕçне мĕнле вĕренсе пынипе пачах та интересленмеççĕ. Пуçламĕш парторганизацисем, çавăн пекех хула комитечĕн çарĕç отделĕ те оборонăллă-массăллă ĕçе кулленех ертсе пымалла.

Стройтрест директорĕ **Стешов** тата Водосвет директорĕ **Антонов** юлташсем вĕсене шанса панă предприятисем мĕнле ĕçлесе пыни çинчен каланипе пĕрлех, хула комитечĕн работникĕсем предприятисен ĕçĕсене тĕплĕн тĕпчесе пĕлме, ĕçре практикăллă пулăшу пама тăрăшманнине кăтартса пачĕç. Антонов юлташ хăйĕн сăмахĕнче: хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ водосветра сайра-хутра çеç пулать, терĕ.

Пухура ВКП(б) обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ **Ахазов** юлташ тухса каларĕ. Вăл партин Шупашкар хула комитечĕн агитациллĕ-массăллă ĕçĕнчи çитменлĕхĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Ĕççыннисем йышлăн çӳрекен предприятисемпе учрежденисенче агитациллĕ ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе яманнине, хулара хаçат витринисем çителĕксĕррине, хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем хатĕрленсе çитмен çынсене агитатора уйăрнине, килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче сахал ĕçленине палăртрĕ. Вăл çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, агитациллĕ ĕçе тата витĕмлĕрех туса пыма кирлине кăтартса пачĕ.

Хула совет исполкомĕн çĕрĕç отделĕн заведующийĕ **Кузнецова** юлташ чылай предприятисен руководителĕсем ялхуçалăх продукчĕсем туса илмелли хуçалăхсене çуракине хатĕрлесе çитерме тăрăшманни, хула совечĕ вăрлăх кивçен парасси çине шанса ларни çинчен каларĕ. Эрехпе ликер тата кирпĕч завочĕсен иртнĕ çулта та подсобнăй хуçалăхсем пулнă, анчах вĕсенче хăйсем валли вăрлăх туса илме тăрăшман, халĕ вара хула советĕнчен вăрлăх пама ыйтаççĕ. Пирĕн хула совечĕн совхозĕ кĕркунне хăйĕн çĕрулмине сутнă, халĕ вăрлăх ыйтать. Паллах ĕнтĕ, хула совечĕ вăрлăх тупса парасси çине шанса ларма юрамасть, кашни предприятин хăйĕн подсобнăй хуçалăхĕнче вăхăтра пахча-çимĕç лартма хатĕрленсе çитмелле, рабочисем валли уйăрнă участоксене пурне те вăхăтра акса хăварма тăрăшас пулать.

Пухура ЦК ВКП(б) çумĕнчи Партиллĕ Контроль Комиссин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ **Серов** юлташ тухса каларĕ. Вăл хулари уйрăм предприятисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене кăтартса пачĕ, вĕсен руководителĕсене хытă критиклерĕ. Водосвет валли илсе килнĕ çĕнĕ машинăсене хăвăртрах вырнаçтарса лартма унăн директорĕ Антонов юлташ тăрăшмасть. Оборудованисемпе туллин усă курмалла, чĕртавара перекетлемелле, предприятисен ĕçне вăйлатмалла, фронтпа çĕршыв валли нихăçанхинчен ытларах продукци туса кăлармалла, терĕ вăл.

Прение тата **Петрова** (Чăвашсоюз), **Поддубко** тата **Полукаров** юлташсем тухса каларĕç.

Парти активĕн пухăвĕ хулари парторганизацисемпе коммунистсем тата мĕнпур ĕççыннисем Сталин юлташăн кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçленине, фронта тата çĕршыва пулăшас тесе ытларах та ытларах тăрăшнине палăртрĕ. Тухса калакансем вырăнти ресурссемпе туллин усă курма кирлине, государствăран сахалтарах ыйтса — государствăна нумайрах пама тăрăшмаллине кăтартса пачĕç, сутуилĕве тата ушкăнпа апатланас ĕçе кирлĕ пек организацилеменшĕн çав организацисен руководителĕсене хытă критиклерĕç.

Доклад тăрăх актив пухăвĕ тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Ÿкерчĕк çинче: Краснодар крайĕнчи Ладожская станицăри Ковшин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ казак Кирилл Петрович Шабанов. Вăл хăй ирĕкĕпе Кубаньри казаксен Н-ски полкне кайса кĕнĕ. Ывăлĕ икĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта. К. П. Шабанов юлташ халĕ хăйсен станицинчи доброволец-казаксен эскадронĕн командирĕ.

М. РЕДКИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

МТС политотделĕн малтанхи ĕçĕсем

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕрлешÿллĕ пленумĕнче ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ Çĕрпÿ районĕн ĕçне, вăл шутра машинно-тракторнăй станцийĕн ĕçне те хытă критиклерĕ. Авăн çапас ĕçре кая юлса пыни, государство умĕнчи парăмсене парса татас ĕç вăрахăн пулса пыни, вăрлăх фончĕсене уйăрса хурас плана пурнăçламанни, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре те юлса пыни партин Çĕрпÿ райкомĕ тата машинно-тракторнăй станци çитекĕсĕр ĕçленине кăтартса параççĕ.

Çĕрпÿри машинно-тракторнăй станцин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнă тата вăл çитменлĕхсем хăшпĕр тĕлĕшре халĕ те пур-ха. ВКП(б) Обкомĕ пулăшнипе машинно-тракторнăй станци хăйĕн ĕçĕнчи чи пысăк кăлтăксене пĕтерчĕ. Тĕслĕхрен, укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчи йĕркесĕрлĕхе пĕтернĕ, трактористсене ĕçукçи вăхăтра тÿлессине йĕркеленĕ. Анчах çак пысăк пулăшупа МТС директорĕ Баранов юлташ кирлĕ пек усă курман, работниксене ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме мобилизацилемен, машинно-тракторнăй станци ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек çĕнетсе урăхлатман. Вутă турттарман пирки мастерскойсем хупăнса тăнă, машинăсене юсас ĕç чарăнса ларнă, ремонтра ĕçлекен рабочисемпе трактористсем килĕсене саланнă. МТС политотделĕ ĕçе тытăннă чухне ĕçри обстановка çакăн пек пулнă.

Вăрçă вăхăтĕнче тыл нумай хут лайăхрах ĕçлеме тивĕç. Политотдел хăйĕн ĕçне малтанхи кунсенчех хуçалăх ĕçĕпе çыхăнтарса тума тытăнчĕ. Машинно-тракторнăй станцин мастерскойĕсен пÿлĕмĕсене ăшăтма вутă турттарас ĕçе организацилерĕ, ремонт рабочийĕсемпе трактористсене ĕçе пухрĕ, машинăсемпе тракторсене юсас ĕçĕн çĕнĕ графикне турĕ, ремонт тăвакан рабочисен бригадисене организацилерĕ, вĕсем ĕçлекен мастерскойсене йĕркене кÿртрĕ, вутă хутса ăшăтмалла турĕ.

Ĕçе çапла организациленĕ хыççăн тракторсене юсас ĕç чылай малалла кайрĕ. 1941 çулти IV-мĕш кварталта пурĕ 13 трактор юсаса кăларнă, плана 50 процент тултарнă. Ĕçе урăхла организациленĕ хыççăн январь уйăхĕнче тата февраль уйăхĕн малтанхи кунĕсенче машинно-тракторнăй станцин коллективĕ 14 трактор юсаса кăларчĕ, вăл шутра 4 трактора капитальнăй ремонт тунă.

Машинно-тракторнăй станци çумĕнчи пуçламăш парторганизацин ĕçĕ тивĕçлĕ вырăнта тăмаçт. Ăна организациленĕренпе 22 уйăх иртнĕ, çак хушăра унăн мĕнпурĕ те 4 пуху çеç пулса иртнĕ. Политотделăн чи малтанхи задачи—станцинчи парторганизацин ĕçне çĕклесси, рабочисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе çивĕчлетесси пулчĕ. Кĕске вăхăт хушшинче парторганизацире икĕ пуху пулса иртрĕ, рабочисен тата руководительсен производствăллă канашлăвĕсем икĕ хут, комсомол организацийĕн пухăвĕ пулчĕ тата МТС рабочийĕсен пĕрлешÿллĕ пухăвне туса ирттертĕмĕр.

Пирĕн машинно-тракторнăй станци умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре кая юлса пынине пĕтермелле, запаслă чăссене пухас тата юсас ĕçе сармалла, вутă хатĕрлес ыйтăва татса памалла. Горючисене тата сĕрмелли япаласене халех турттарма тытăнмалла, станцине колхозсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетмелле, МТС Советне пухса калаçмалла, колхозсемпе договорсем тумалла, суракине хатĕрленсе çитмелле.

ВКП(б) райкомĕпе МТС политотделĕ хăйсен ĕçне тачăн çыхăнтарса туса пыраççĕ. Анчах машинно-тракторнăй станци ĕçне кирлĕ пек, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек çĕнетсе çирĕплетиччен, политотдела райком вăйлăн пулăшса тăни кирлĕ пулать.

Я. ЛУКИН,

Çĕрпÿ МТС политотделĕн начальникĕ.

Тылпа фронт хушшинчи çирĕп çыхăну

Хĕрлĕ Çар воинĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ, вĕсем çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерÿсем ĕçсыннисене вĕçĕ-хĕррисĕр хĕпĕртеттереççĕ, вĕсене тылра татах та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ, фронта пулăшас ĕçе татах та вăйлатса пыма пулăшаççĕ.

Пирĕн фронтпа тыл хушшинче уйрăмлăх çук. Пирĕн пĕр задача: тăван çĕршыв çине килсе тапăннă нимĕç захватчикĕсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкасси.

Фронтпа тыл хушшинче яланах çирĕп çыхăну. Хĕрлĕ Çар боецĕсем çапăçу хирĕсенчен хăйсен тăванĕсем, юлташĕсем, тусĕсем патне çырусем çыраççĕ, фронтри пурнăçсем çинчен пĕлтереççĕ. Çав вăхăтрах тылра ĕçлекенсем те боецсене хăйсем фронта епле пулăшса пыни çинчен пĕлтерсех тăраççĕ, кунсăр пуçне вĕсем посылкăсемпе парнесем, ăшă саламсем яраççĕ.

Нумаях та пулмасть Çĕмĕрле районĕнчи апат-çимĕç комбинатĕнче ĕçлекенсем Калинински фронтри действующи армине хăйсем туса кăларакан продукцирен 67 килограмм премĕк ячĕç. Посылкăпа пĕрле комбинат коллективĕ çакăн пек çыру ячĕ:

«Эпир, Çĕмĕрле райпишекомбинатĕнчи рабочисемпе служащисем, фашистла йытăсене хирĕç эсир туса пыракан çĕнтерÿсене пысăк хавхаланупа сăнаса пыратпăр, вăл çĕнтерÿсем пире савăнтараççĕ.

Фашистла çĕлен-калтасене тата вирлĕрех çĕмĕрĕр.

Эпир туса кăларакан кашни ытлашши килограмм продукци фашизма çĕмĕрсе тăкассине хăвăртлатма пулăшнине эпир лайăх пĕлетпĕр».

Комбинат коллективĕ çак кунсенче ответ илчĕ. Ăна гвардейски дивизири подразделенин боецĕсем хушнипе парторг Иван Андреевич Лапыгин çырнă. Тăван боецсем хăйсен çырăвĕнче çапла çыраççĕ:

«Сирĕн парнесем пире хавхалантараççĕ, тăшмана хăвăртрах тата пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма çĕклеççĕ, татах та ытларах вăй пăраççĕ.

Хаклă юлташсем, пирĕн пĕр тĕллев —хисеплĕ тăван çĕршыв çине килсе тапăннă бандăна пĕтĕмпех пĕтерсе тăкасси. Плана ытлашшипех тултарса ĕçлĕр, тăшмана хăвăртрах çĕмĕрме пире пулăшăр. Иосиф Виссарионович Сталин ертсе пынипе фашистла çĕлен-калтасене эпир пĕтĕмпех çапса аркатăпăр».

Çĕмĕрле районĕнчи ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар воинĕсем патне сахал мар парнесем, посылкăсем ячĕç. Ун пек посылкăсем çĕнĕ çул ячĕпе чылай янă, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа та нумай ячĕç. «Çĕнтерÿ тума сывлăх сунатпăр. Хамăр енчен сире ялан пулăшса тăма, производствăра е колхозра мĕнпур вăя хурса ĕçлеме пулатпăр», теççĕ ĕçсыннисем çырусенче.

Прокопий Львов виçĕ-тăватă çул каялла древкомбинатри столярнăй цехра ĕçленĕ, стахановец пулнă. Халь вăл отечественнăй вăрçăн участникĕ. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пынă çапăçура унăн урине фашист пульли амантнă. Нумай та пулмасть, юлташĕ патне вăл çыру çырчĕ. «Фашистсене канăç памастпăр, паттăр Хĕрлĕ Çар тăшмана çирĕппĕн çапать. Вăхăт çитĕ —юнлă фашизма Хĕрлĕ Çар яланлăхах пĕтерсе хурĕ. Эпĕ сывалса çитнĕ пекех; часах акă каллех винтовка тытса, гитлерла бандитсене ăшалама фронта каятăп», тесе çырать Львов юлташ.

Х. ЛИСИН.

Уяв ячĕпе янă парнесем

ЕТĔРНЕ. (Телефонпа). Районри ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа фронтри боецсем патне питех те нумай парнесем ячĕç.

Госбанк работникĕсем, çапла, 3 килограмм махорка, 10 мăлăр чăлха, 8 çăмса тутри, конвертсемпе çырмалли хут чылай ярса пачĕç. Лесхоз коллективĕ 4 килограмм пыл, 12 катăк супăнь ярса пачĕ. Посылкăпа пĕрле вĕсем çыру çырчĕç. Çав çырура вĕсем хăйсем енчен фронта куллен, мĕн вăй çитнĕ таранах пулăшса пыма сăмах пачĕç. Районри больницăра ĕçлекенсем паттăр воинсем патне—печени, Засурскри «Красноармеец», Кăташри «Пионер» колхозсем—тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ сухари т. ыт. тĕрлĕ паха парнесем ячĕç.

Волчья Долинăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕр вăкăр пачĕ.

И. ЛЬВОВ

Артель мĕншĕн юлса пырать

КÿКЕÇ. (Хамăр корр.). Шурчакассинчи мартăн 8-мĕш ячĕпе тăракан артель хĕрлĕ тăмран савăт-сапасем, кÿршекчÿлмексем тата ытти те туса кăларать. Ку артель куллен кирлĕ савăт-сапасем туса кăларса, таврари ĕçсыннисене пысăк пулăшу пама пултарать.

Анчах та артель начар ĕçлет-ха. Вăл производство программине иртнĕ çулта тултарман, кăçал та тултарса пыраймасть. Çавна пула артель хăйĕн продукцине базарсене илсе тухса сутаймасть.

— Сирĕн артель мĕншĕн юлса пырать? — тесе ыйтсан, артель правленинче ĕçлекенсем тÿрех вутă çукки çине йăвантараççĕ.

Тăмран тунă савăт-сапасене типĕтме вутă кирли пуриншĕн те паллă. Кирлĕ чĕртаварсене, вăл шутрах вутта та, артелĕн хăйĕн хатĕрлемелле. Анчах та артель правлени председателĕ А. Федоров юлташ артеле йĕркеллĕ ĕçлеттерессишĕн тăрăшмасть. Вăл хаклă вăхăта пуринчен ытла килĕнче ирттерет, тепĕр чухне кунĕ-кунĕпех килĕнче ларать.

Хĕрлĕ тăмран савăт-сапасем тума укçа-тенкĕ нумай кирлĕ мар. Тăмран тунă савăт-сапасем йÿнĕ пулаççĕ. Вырăнти чĕртавартан ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси вăрçă вăхăтĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Артелĕн хăйĕн программине кашни уйăхрах тултарса пырса, ĕçсыннисен ыйтăвне тивĕçтерессишĕн тăрăшмалла.

Г. ПЕТРОВ.

Подсобнăй хуçалăхсем [illegible]

Хальхи вăхăтра пахча-çимĕç ыйтăвĕ [illegible] пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та 1942 çулти январĕн 23-мĕшĕнче ЧАССР [illegible] промышленность предприятисем [illegible] подсобнăй хуçалăхсем [illegible].

[illegible]

Шупашкар хула Совечĕн [illegible]

Подсобнăй хуçалăх [illegible]

Хула Совечĕн совхозĕ те [illegible]

1942 çулта совхоз пахча-çимĕç [illegible]

Пур ĕçе те [illegible]

КУЗНЕЦОВА.

Пахча-çимĕç лартса ÿстерме хатĕрленеççĕ

Канаши [illegible]

— Хамăр агрономсем пулăшсă,—тет, [illegible] Половьев юлташ.

Т. ИВАНОВ.

Пысăк тупăш илеççĕ

КАНАШ. Вăтаçăс-Тăтăйĕри Чкалов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем иртнĕ çул уйра [illegible] пустарса кĕчĕç [illegible] 13 центнер [illegible] 14-шар центнер ытла тухнă [illegible] 15 центнер ытла туса илнĕ.

[illegible] Н. Данилов колхозник семьи 2 пин ĕç- кунĕ тунă [illegible] 57 центнер ытла [illegible] Т. Яковлев колхозник семьи те 40 центнер [illegible] А. Захаров, Г. Яковлев, С. Данилов, Е. Егоров колхозниксем те [illegible]

Колхозниксем [illegible] Хĕрлĕ Çар [illegible] Н. Данилов юлташ государствăна пĕр центнер [illegible]

Т. ТУРХАН.

Колхоз хулана ялхуçалăх продукчĕсем сутать

СОВЕТСКОЕ. Февралĕн 25-мĕшĕнче Тури Атакри «Крестьянская газета» колхоз [illegible] пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура колхозниксем Шупашкар хулинчи рабочисене ялхуçалăх продукчĕсем сутас ыйтăва сÿтсе-яврĕç. Çĕршывăн пĕтĕм промышленноçĕ, çавăн пекех пирĕн хуласенчи предприятисем те, фронт валли продукци нумайрах туса кăларассишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхозниксем [illegible] йышăнчĕç. Çак çитес кунсенчех «Крестьянская газета» колхоз Шупашкарти рабочисене 6 центнер пăрça-ясмăк, 3 центнер аш-какай, 50 килограмм çу, 10 центнер çĕрулми, 5 центнер помидор, 2 центнер кишĕр тата 500 çăмарта сутма йышăнчĕ.

МИХАЙЛОВ.

Пурнăçпа çыхăнтарнă географи урокĕсемшĕн

Германи фашизмĕ пирĕн чечекленекен çĕршыв çине хаярран тапăннă вăхăтра географи урокĕсене ирттерес ĕçе пĕтĕмĕшпех урăхлатас, çĕнетес задача тухса тăчĕ. Географи урокĕсене хальхи тапхăрпа, тĕнчери лару-тăрупа тачă çыхăнтарса пымалла, географи урокĕсенче илекен пĕлÿпе вăрçă вăхăтĕнче усă курмалла пултăр. Географин хăшпĕр вырăнĕсене уйрăмăнах тĕплĕн ăнлантарса, практикăра ирттерсе, вĕсемпе вăрçăра анлăн усă курма вĕрентмелле.

Вăрçă вăхăчĕ пулин те, географие вĕрентекен учительсенчен хăшĕ-пĕрисем хăйсен ĕçне халиччененех çĕнетеймеççĕ-ха, вĕсене мирлĕ вăхăтри пекех туса пыраççĕ. Çакăн пек учительсем географи урокĕсене вулав урокĕ майлă ирттереççĕ, карттăсемпе тата ытти пособисемпе сахал усă кураççĕ. Вĕсем урокĕсене тĕплĕн хатĕрленсе пымаççĕ, учебникри материалпа кăна усă кураççĕ. Ытти источниксенчен, хаçатсенсенчен, журналсенчен т. ыт. те илнĕ—урока çĕнетекен, тăван çĕршыва юратма вĕрентекен, тăшмансене кураймми тума вĕрентекен материалсемпе усă курма пĕлмеççĕ. (Тăрăшакан учительсем географи вĕрентес ĕçре кирлĕ статьясене касса пухса пыраççĕ). Хăшĕсем урок планĕ тăрăх урокăн хăш вырăнĕнче мĕнле çĕнĕ япала çинчен каласине, вĕсене мĕнпе çыхăнтармаллине паллă туса хумаççĕ. Çакна туманни пысăк çитменлĕх пулать.

Вĕренекен ача географие юратса вĕрентĕр, шкултан вĕренсе тухсан ăна хăй тĕллĕн малалла вĕрентĕр, географи пĕлĕвĕпе пурнăçра усă куртăр, сынсене те усă кăтарттăр, вăрçăра та, çĕр ĕçĕнче те тата ытти ĕçсенче те анлăн усă куртăр. Эпĕ çаплах каласшăн: кам географие пĕлмест—çав çын карттăна ăнланмасть, хаçат-журналсене, кĕнекесене тĕплĕн ăнланса вулама пултараймасть; çав хамăр çĕршывăшăн кирлĕ пек пысăк пĕлÿлĕхлĕ боец, командир, политрук пулма пултараймасть. Пирĕн хамăрăн та, ачасен те çĕр чăмăрне, ун çинчи пурнăçа тата явленисене тĕплĕрех пĕлмелле. Ачасене кĕнеке вуланă чухне хăйсен умне географи карттине сарса хума хăнăхтармалла. Вĕсем унпала яланах анлăн усă курччăр; географи терминĕсене ăнланса, пурне те тупсах пыччăр. Тайга çинчен вуланă чухне—тайгăра, Австрали çинчен вуланă чухне — Австралире. Мускав çинчен вуланă чухне—Мускавра, Англи çинчен вуланă чухне — Англире çÿренĕ пек туйччăр вĕсем. Хамăр çĕршыва мĕнле пĕлеççĕ, çавăн пекех ытти çĕршывсене те, хальхи вăхăтра уйрăмăнах Германи çĕршывне, витĕр курса пĕлсе тăма вĕренччĕр ачасем. Тăшманăн çĕршывне лайăх пĕлни—тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте, ăна çапса салатас ĕçре пит нумай пулăшать. Халиччен шкулсенче юсçĕршывсене вĕреннĕ вăхăтра çиелтен çеç шăйăрттарса пынă.

Градус сеткине вĕренес ĕç хăшпĕр шкулсенче çиелтен иртсе пырать. Ачасен кĕнекере, хаçат-журналсенче кăтартнă вырăн хăш долготара, хăш широтара, хамăр пурăнакан вырăнтан (Чăваш республикинчен) хăш енче пулнине, инçипе çывăххине (миçе километрне) пĕлсе вуламалла.

Кашни ачанах сантиметр çине пайланă линейка пулмалла. Иртнĕ çулсенче нумай шкулсенче географи карттисене вăхăтлăха (уроксенче) анчах çакатчĕç, урок пĕтсенех вара вĕсене васкаса пуçтарса хуратчĕç. Çапла тăвакансем, çапла тума шухăшлакан учительсем, директорсем, завучсем кăçалхи çул та тĕл пулаççĕ-ха. Çапла туни ачасене пысăк чăрмав кÿрет. Эпĕ хам шкулта вĕрентнĕ чухне ачасене карттăсемпе яланах анлăн усă курма ирĕк параттăм. Манăн ачасем урoксем пуçланиччен те, уроксенче те, урoксем хыççăн та карттăсем умне тăрса вĕсене вулама хăнăхатчĕç, отличниксемпе ударниксем сахалрах пĕлекен юлташĕсене пулăшу паратчĕç. Çапла майпа вара географипе кая юлса пыракан ачасем пулмасчĕç. Халĕ эпĕ çутĕç пайĕн инспекторĕ пулса ĕçлетĕп. Учительсене географи вĕрентнĕ чух ачасене интереслентерекен меслетсем çинчен калаçах, асăрхаттарсах тăрататăп.

Кашни класрах сантиметрсем çине пайланă метр, тирпейлĕ указка стена çинче çакăнсах тăмалла, вĕсемпе ачасем яланах усă курччăр.

Ачасенчен хăшĕ-пĕрисем масштаба часах ăнланса, тавçăрса илеймеççĕ, çавăнпа вара карттăсем çине ăнланмасăр пăхаççĕ. Ачасем анчах мар, учительсенчен те хисеплĕ масштаба тĕрĕс ăнланса илейменнисем тĕл пулкалаççĕ. Масштаб çинчен физикăлла географи анчах вĕрентет пулсан та (ун çинчен вĕренме вăхăт та нумаях уйăрман), масштаба вĕренсе иртнĕ хыççăн та тăтăшах аса илтерсе тăмалла, унпа практикăра усă курмалла.

Тĕнче енĕсене пĕр иккĕленмесĕр кăтартса пама хăнăхтарасси те шкулсенче пысăк вырăн йышăнать. Ку тĕлĕшпе пысăк переменăсенче, пушă вăхăтсенче, вăййăсем ирттермелле, компаспа усă курса хушнă еннелле утма хăнăхтармалла. Çак япала çарта пысăк вырăн йышăнать. «Азимут» тенĕ термина ачасем час-часах пĕр хăлхинчен кĕртсе тепринчен кăларса яраççĕ, анчах та практикăра ирттерсен, вĕсем çак термина тĕплĕн ăнланаççĕ, пурнăçра та, кирлĕ вăхăтра, яланах усă кураççĕ (пулас боецсемшĕн çак япала кирлех).

Кунсăр пуçне тĕнче енĕсене тĕрлĕ япаларан чухласа илме хăнăхтармалла (полярнăй çăлтăрĕнчен, ÿсекен йывăç хупписенчен т. ыт. те).

Тата япаласене, çĕршыв вырăнне пĕчĕклетсе ÿкерни те (план, карттă) ачасене интереслентерет, çак вăхăтрах вăл питех те кирлĕ те. Çак ĕçе пĕчĕкрен пуçласа майĕпен сарса, пысăклатса пымалла, класри сĕтелрен пуçласа колхоз уйхирĕн лаптăкĕ таранах ÿкерсе илме вĕрентмелле. Ку ĕç çăмăлах мар, анчах та питех те кирлĕ ĕç.

Куçвиçипе ÿкерсе илесси те (глазомерная съемка) шкулсенче пысăк вырăн йышăнмалла. Ачасем, паллах, пĕрре-иккĕ кăтартса панипех çак ĕçе тума хăнăхса çитеймеççĕ. Ку ĕçе темиçе хут, çирĕп ăнланиччен, туса ирттерсен аван пулать. Программа тăрăх вăхăт сахал панă пулсан, çуркунне е çуллахи вăхăтра ку ĕçе урoксем хыççăн лайăх пурнăçлама пулать. Куçвиçипе ÿкерме тытăниччен кашни ачанах (учителĕн хăйĕн те) хăйĕн утăмĕн пысăкăшне татăклăн, тĕрĕс пĕлмелле, кашни ачанах планшет тата ытти хатĕрсем те пулмалла.

Пирĕн нумай шкулсенче 30—40 ача пуçне пĕр планшет кăна пулнипе, ачасенчен нумайĕшĕсем учитель мĕнле ĕçленине курма пултараймаççĕ, ăнланмасăр юлаççĕ. Çавăн пирки вара чылай ачасемшĕн куçвиçипе ÿкерме вĕрентекен урок кану урокĕ кăна пулса тăрать. Планшет хăмисем çителĕклĕ пулсан та, компас çителĕксĕрри чăрмантарать. Компас хаклă япала мар, ăна кашни шкулăн кирлĕ таранах туянмалла. Урокра пĕрле ĕçленисĕр пуçне, учителĕн ачасене уйрăм заданисем памалла, ĕçе хăнăхтармалла. Пĕр виçмесĕр, метр патаккине тытмасăр плана тĕрĕс ÿкерсе илни ачасене анчах мар, çитĕннисене те интереслентерет. Куçвиçипе ÿкерессине тата топографи кружокĕнче ирттерме пулать.

Ачасене пĕчĕкренпех çар ĕçне вĕрентесси — пирĕн тĕллев пулса тăрать. Çак ыйту уйрăмăнах вăрçă вăхăтĕнче кирлĕ, ăна тума пирĕн питĕ пурнăç хăй ыйтать, ăна çĕршыв ыйтать.

Физикăлла географире топографи карттисене вĕренесси çинчен çырман, ун çинче топографи карттисен хăшпĕр паллисене кăтартнă та, çавăнпа чарăннă. Çак раздел вăрçă условинче анчах мар, мирлĕ условире те çавтери çителĕксĕр. Нумай учительсем географире шалани çумне ытти источниксенчен илсе хушмаççĕ, топографи карттисене вулама, вĕсене ÿкерсе илме ачасене хăнăхтармаççĕ. Топографи карттине ăнланса вулама вĕрентменни—пирĕн шкулăн пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрать. Çак ĕç çине малашне пивĕçлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Урoксене çителĕклĕн хатĕрленсе пымалла, топографи карттисемпе тата ытти хатĕрсемпе те кирлĕ таран усă курмалла, çак майпа çеç географи урокĕсенчи çитменлĕхсене сирсе яма пулать.

Ачасене экскурсисене илсе кайса, çывăхри сăртсен çÿллĕшне виçме вĕрентмелле.

Программăра кăтартнă вăхăт, паллах, питех те çителĕксĕр. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе вĕренме топографи кружокĕсем организацилес пулать.

Кĕркуннепе çуркунне шкул картишĕнче географи площадки организацилемелле. Çав площадкăра кăнтăр йĕрне палăртма пулăшакан юпа, хĕвел сехечĕ тата ыт. те пулмалла.

Кашни ачан вырăнти меридиана тата параллеле тупма пĕлмелле.

6-мĕшпе 7-мĕш классенче, вĕренсе пынă май, тĕнче пайĕсен, государствăсен, крайсен, облаçсен карттисене тутарса (ÿкерттерсе) пымалла, карттăсене тĕрĕс ÿкерттерессишĕн тăрăшмалла. (Ача-пăча хăйĕн аллипе тунă япалана нихăçан та манмасть). Кунта уйрăмăнах хамăр çĕршывра тата ытти государствăсенче те çĕр айĕнчен тупакан пурлăхсен вырăнĕсене паллă тутармалла. Çапла тунипе ачасем хамăр çĕршыв çĕр айĕнчи пуянлăхпа нумай государствăсенчен малта тăнине кураççĕ.

Карттăна лайăх вулама хăнăхтарас тесе тата вĕреннĕ материала манмалла мар тăвас тесе, кашни урокра тенĕ пекех карттă тăрăх «çул çÿремешкĕн» пăртак вăхăт уйăрмалла. Çак япала уйрăмăнах вĕренÿ çулĕн юлашки чĕрĕкĕнче, повторени урокĕсене питĕ хаклă тата кирлĕ пулать. Çапла тусассăн ачасем пуçран тухми çирĕп пĕлÿ илеççĕ.

Тĕрлĕ государствăсен çĕр таликишĕ çинчен ăнлантармалла пулсан, вĕсене пĕтĕм Совет Союзĕн е Чăваш республикин талăкишĕпе танлаштарсан аван пулать. Çапла тусассăн ачасем пĕр çĕршывпа тепĕр çĕршывăн пысăкăшĕ тĕлĕшпе уйрăмлăха часрах, çăмăлрах, çирĕпрех ăнланаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче ачасене географи вĕрентесси— пысăк та ответлă ĕç. Географи вĕрентекен учитель пур енĕпе те лайăх пĕлекен тата политикăна витĕр пĕлсе тăракан çын пулмалла. Унăн географи урокĕсене хальхи тапхăрпа çыхăнтарнă маях, ачасене урoксем хыççăн, каннă вăхăтсенче, çулçÿревçĕсен (пуринчен ытла вырăс çулçÿревçисен) пурнăçĕпе, ĕçĕсемпе паллаштармалла. (Çурçĕрти Пăрлă океана алла илни, Мускавран Çурçĕр полюс урлă Америкăна вĕçни тата ыт. те).

Политинформаци ирттересси те географипе тачă çыхăнса тăмалла. Географи вĕрентекен учитель чи лайăх агитаторсен шутĕнче пулмалла. Унăн политинформацисене ятарласах хатĕрленĕ карттăсемпе усă курса ирттермелле.

Çакна та хытă астутарса хăварас килет: кашни шкултах «И. В. Сталин на фронтах гражданской войны» ятлă карттă пулмалла. Çак карттă клубсенче те, вулав çурчĕсенче те пулма тивĕçлĕ. Çав карттă—Совет халăхĕ темле йывăрлăх килсе çапăнсан та пуçне усас çуккине, совет халăхĕ темле йывăрлăхран та хăтăлма пултарнине, И. В. Сталин ертсе пынипе пирĕн Хĕрлĕ Çар хальхи вăрçăра та тăшмана çапса салатассине шансах тăма вĕрентет.

Çапла ĕнтĕ, юлташсем, географи вĕрентес ĕçе татах та лайăхлатма тăрăшар, ăна тарăнраххăн та анлăраххăн тата чĕрĕ пурнăçпа, практикăпа çыхăнтарса пырар. Республикăри пултаруллă учительсен паха опычĕсемпе анлăн усă курса, географие вĕренес ĕçе хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне лартар. Пирĕн шкул ачисем Хĕрлĕ Çар ретне пĕтĕм тĕнче географине тĕплĕн пĕлекен çынсем пулса кĕччĕр. Хăйсен тăван çĕршывне вĕсем пуринчен те ытларах пĕлччĕр, ăна юратчăр, уншăн яланах пĕтĕм вăя, мĕнпур ăса хурса çапăçма хатĕр пулччăр.

ИПАТИЙ МАРКОВ.

РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

гитлеровецсем туса ирттерекен кампанин тамăслăн путланса ларнă. Çакăн хыççăн Германи правительстви мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа пăхăр укçасем çÿремеççĕ тесе пĕлтерсе, вĕсене хут укçапа улăштарма хушнă. Анчах та халăх пăхăр укçасене нимĕне те тăман хут укçасемпе улăштарма шутламасть те. Çакна май февралĕн 28-мĕшĕнче Германи информаци бюровĕ нимĕç влаçĕсен çак распоряженине хирĕç саботаж тăвакансене хăратма пĕлтерÿ кăларнă. Гитлеровецсем ачасене хăйсен пухмачри укçисене пăхса тухма тата пăхăр пфеннигĕсене вăхăтра хут укçасемпе улăштарма хушаççĕ. Германи информаци бюровĕ «пăхăр укçасене улăштарманнисемпе ответ тыттараççĕ», тесе асăрхаттарать. Гитлеровецсем, ачасен пухмачĕсенчи укçасем патне те çитрĕç пулсан, вĕсен ĕçсем питех те начар пулас.

* * *

Амур çинчи Комсомольскри машинăсем тăвакан заводри стахановец Сазонов юлташ васкавлă задани илнĕ тыççăн талăк ытла цехран тухмасăр ĕçленĕ. Вăл норма тăрăх 93 сехетре тумалли ĕçе 28 сехетре туса пĕтернĕ.

Мартăн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 2 ДЗОТ-не, 15 блиндаж-землянкине, 2 наблюдательнăй пунктне аркатса тăкнă, нимĕçсен 2 танкне тата темиçе станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем ручной пулеметсем, автоматсемпе боеприпассем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 1.200 виллине пăрахса хăварнă.

* * *

Коротков юлташ командир пулса ертсе пыракан зенитчиксен стрелковăй чаçĕ (Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки 10 кун хушшинче тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Старая Русса районĕнче çавăрса илнĕ нимĕçсен 16-мĕш армийĕ снабжени тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк йывăрлăхсем тÿсет. Нимĕçсен командованийĕ вĕсене продовольствипе боеприпассем самолетсемпе пырса пама хăтланать. Пирĕн летчиксем тăшманăн çав планĕсене пăсса пыраççĕ. Нумаях та пулмасть пирĕн разведка Г. районĕнчи аэродром çинче тăшманăн транспорт самолечĕсем пухăнса ларнине пĕлтернĕ. Часах çав аэродром тĕлне пирĕн 4 штурмовикпа 9 истребитель вĕçсе пынă. Штурмовиксем икĕ хутчен атака туса противникăн 10 самолетне, зенитнăй артиллерин 2 орудине тата бензоскладне пĕтерсе тăкнă. Çав кунах пирĕн тепĕр авиазвено нимĕçсене «Ю—52» йышши 5 самолетне çĕр çинче тата сывлăшра пĕтерсе тăкнă.

* * *

Полтава партизанĕсен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕç оккупанчĕсене пысăк сиен курет. Çак отряд хăйĕн кĕрешĕвне пуçласа янăранпа совет патриочĕсем 260 гитлеровеца, çав шутран оккупациленĕ хуласен 3 комендантне, полицин 4 начальникне, 10 офицера ытла, 26 полицейскине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен тылĕнче 2 кĕпере, паровоза тата темиçе автомашинăна сирпĕнтерсе янă. Нумаях та пулмасть партизансем çакăн пек ĕç пулса иртнине курнă: нимĕç войскисен отрячĕ полицин карательнăй отрядне партизансем вырăнне йышăнса ăна пеме тытăннă. Çакăн пек пĕр-пĕрне хаяррăн пенипе пула икĕ енĕ те пысăк çухатусем тунă.

* * *

4-мĕш «СС» полкăн 12-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Нейштадт çапла каласа панă: «Декабрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн полка самолетсемпе Красовран фронта илсе килчĕç. Çапăçусем полка халран ячĕç. Эпир питĕ пысăк çухатусем тÿсрĕмĕр. 12-мĕш ротăра 180 салтак пулнă, 40 салтакран ытла юлман. Офицерсенчен пĕр обер-лейтенант Граун çеç чĕрĕ юлнă. 11-мĕш ротăра 30 салтак, 3-мĕш ротăра 15—20 салтак юлнă. Полксенче халĕ чăннипе санитарсем çук та, мĕншĕн тесен вĕсене пурне те стрелоксем туса ротăсене янă. Нумаях та пулмасть 1-мĕш батальонра пĕр салтака, хушнине итлеменшĕн, офицер персе пăрахрĕ. Пирĕн ротăран унтер-офицер Штеелятер, обер-ефрейтор Гаффнер тата 2 салтак тарнă. Вĕсем тăваттăшĕ те эпир фронта çитсен малтанхи кунсем хушшинчех тарнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем партизансенчен çав тери хăраççĕ. Январь уйăхĕн пуçламăшĕнче партизансем пирĕн ротăсенчен пĕрин çине тапăнса 5 салтака вĕлернĕ, темиçе салтака амантнă».

* * *

Н-ски санитарнăй батальонри военнослужащисем, колхозниксен группипе пĕрле, гитлерла бандитсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене тискеррĕн асаплантарни çинчен акт çырнă. Актра çапла кăтартса панă: Смоленск облаçĕнчи Дзержински районри Богданово ялне пирĕн чаçсем йышăнса илсен У. О. Прохорова çурчĕн подвалĕнче, нимĕçсем ишĕлтерсе хăварнăскерĕнче, 8 красноармеецăн виллине тупнă. Виллесене медицина работникĕсем тĕпчесе пăхсан вĕсен чиксе-касса амантнине, çапса юнăхтарса янисене, пĕçертнисене, ал-ура шăммисене хуçнине палăртнă. Çак сурансем ĕнтĕ нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене çав тери тискеррĕн асаплантарнине, çакна пула вара 8 красноармеец та виллине кăтартса пăраççĕ. Акт çине санитарнăй батальон ротин командирĕ Васильев, политрук Позовинкин, 3-мĕш рангри военврач Травин; «Красный флот» колхоз председателĕ Чекменев, Остроженск ялсовечĕн депутачĕсем Мурашевăпа Пискарева, красноармеецсем Разуваевпа Комков алă пуснă.

СССР Совнаркомĕнче

Колхозсен акмасăр юлакан çĕрĕсене кÿршĕри колхозсене акса хăварма ирĕк парасси çинчен

Кÿршĕри колхозсен акмасăр юлакан сухаламалли çĕрĕсем çине тырă акса хăварса хăйсен акакан çĕр лаптăкне пысăклатма ирĕк памашкăн ыйтнă колхозсен кăмăлне шута илсе, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

Вăрçă вăхăтĕнче союзлă тата автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсем, крайпа тата область исполкомĕсем уйрăм колхозсене кÿршĕри колхозсен акмасăр юлакан сухаламалли çĕрĕсем çине, çав кÿршĕри колхозсем килĕшсен, тырă акса хăварма ирĕк пама пултараççĕ.

Çапла акса хăварнă çĕр лаптăкĕшĕн ялхуçалăх продукчĕсем тăратмалли государство обязательствисене пурнăçа кĕртме çĕре акса хăварнă колхозсем çине хумалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ССР Союз Совнаркомĕн 1941 çулти майăн 23-мĕшĕнче кăларнă постановленийĕ тăрăх, 1942 çултан пуçласа пирĕн республикăри колхозсен, колхозниксен, единоличниксен государствăна обязательнăй йĕркепе сурăх сĕтĕнчен брынза-чăкăт туса памалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ 1942 çулта государствăна брынза-чăкăт тăратас тĕлĕшпе кашни районшăнах пĕр пек нормăсем çирĕплетрĕ. Вăл нормăсем тăрăх государствăна брынза-чăкăт: колхозсен—кашни гектар çĕр лаптăкĕ пуçне 25 грамм тăратмалла, колхозниксен хуçалăхĕсен 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне пулнă кашни сурăх пуçне —375 грамм, единоличниксен хуçалăхĕсен—500 грамм брынза-чăкăт памалла.

Колхозсен, колхозниксемпе единоличниксен хуçалăхĕсен брынза-чăкăт тăратмалли хăйсен обязательствисене сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр парса татмалла. Уйăх хушшинче мĕн чухлĕ брынза-чăкăт памалли нормăна Наркомзагăн районсенчи уполномочевăйĕсем кăтартса параççĕ.

Колхозсем çуракине хатĕрленеççĕ

СУХИНИЧИ (Смоленск облаçĕ), февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă районсенче колхоз хресченĕсем хăйсен артель хуçалăхĕсене аталантарас тĕлĕшпе пикенсех ĕçлеççĕ.

Кĕркунне çĕр айне пытарса хăварнă тырпул вăрлăхне, ĕçхатĕрĕсене тата лаша таврашсене кăлараççĕ. Хăшпĕр ялсенче кăшт-кашт упранса юлкаланă тырă пулла çапаççĕ, çуркунне акма вăрлăх пухаççĕ. «Социалистическая деревня», «Сеятель» тата «Парижская Коммуна» колхозсенче çуракине акма вăрлăх чылай пухса çитерне. Халĕ ĕнтĕ кунти колхозниксем çураки çитиччен ĕç хатĕрĕсене, лаша таврашĕсене, транспорт япалисене майласа йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Сухиничири МТС-ре хĕрÿллĕ ĕçсем пыраççĕ. МТС-н ремонт мастерскойĕн тимĕрçĕ цехĕнче заправкăсем тумалли çĕнĕ инвентарь туса хатĕрлеççĕ. Упранса юлнă тракторсемпе машинăсене юсама МТС усадьбине пухса пыраççĕ. Машинăсемпе тракторсен запаслă пайĕсене пурне те вырăнтах тупса çитернĕ. Вĕсене иртнĕ кĕркунне çĕре пытарса хăварнă пулнă. Тракторсен магнетисене тата лаха ытти пайĕсене хăшпĕр тракторитсем хăйсем тупса пынă. Çакăн пек чи паха пайĕсене вĕсем МТС-е нимĕçсем йышăннă хыççăн машинăсем çинчен вăртăн илсе кайса пытарнă.

ТАСС ОПРОВЕРЖЕНИЙĔ

«Нью-Йорк таймс» хаçат хăйĕн Берри корреспонденчĕн телеграммине пичетлесе кăларнă, çав телеграммăра корреспондент Совет Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисем çинчен киревсĕррĕн суеçтерет. Мускавран нихăçан та паман темĕнле радиопередачăран пĕлнĕ пек туса, çав корреспондент совет правительстви «Японин совет территорийĕнчи пурлăхĕсем çине секвестр хунă» тесе суять. Корреспондент каланă тăрăхах, ТАСС агентстви темĕнле пĕлтерÿре вырăссен войскисем Охотск тинĕсĕнчи стратегиллĕ пунктсем патнелле вăйлăн куçни çинчен каланă иккен. ТАСС агентстви нихăçан та кун пек пĕлтерÿ паман. Малалла вара корреспондент, хăй ăçтан пĕлнине кăтартмасăрах, хăй пуçĕнчен шухăшласа кăларнă суя сăмахсене сарать; çав корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, юлашки темиçе эрне хушшинче совет правительстви Япони çар аталанăне фронт линине пырса курма чарнă имĕш (сăмах майĕн каласан, Японин çар атапи фронт линине нихăçан та пырса курман) тата Сахалинна материкран уйăрса тăракан Татарски пролива СССР юлашки 48 сехет хушшинче питĕ те вăйлăн минăласа тухнă иккен.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: «Нью-Йорк таймс» хаçатăн çав пĕлтерĕвĕсем малтан пуçласа вĕçне çитиех пуçран шухăшласа кăларнă элек пулса тăраççĕ.

Франципе Америка хушшинчи отношенисем

ВАШИНГТОН, мартăн 1-мĕш. (ТАСС). Государственнăй секретарăн ĕçĕсене тăвакан Уэллес Францине Америка хушшинчи отношенисем çинчен официальнăй заявлени тунă. Вăл çапла пĕлтернĕ: февралĕн 10-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ маршал Петэн патне янă хăйĕн личнăй посланийĕнче Петэна çапла каласа панă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви алла илнĕ сведенисем тăрăх, Франци метрополийĕнчен Çурçĕр Африкăна тĕнĕл держависен войскисем валли Ливире усă курмашкăн материалсем янă, тенĕ. Президент хăйĕн çав посланийĕнче малалла çапла каланă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви Франци положенине ăнланать, çавăн пекех перемири çинчен тунă килĕшÿ Францие мĕнле чăрмавсем кÿнине те пĕлсе тăрать. Анчах та, Франция çар материалĕсем е тата урăх материалсем те тĕнĕл держависем патне ярса тăрсан, вĕсене пулăшу парса пырсан, е çав тĕлĕшпе перемири çинчен тунă килĕшÿрен тухса тăман мĕчле те пулин ытти утăмсем тусан, Франци правительстви хăйне-хăй Америка халăхĕн ылханлă тăшманĕсене тÿрремĕнех пулăшса тăракан правительствăсен шутне кĕртсе ярать. Çакă вăл,—тенĕ президент посланийĕнче.—Франци халăхĕн ирĕкне пусмăрлани пулĕччĕ, Францин малашлăхĕшĕн чăннипех те ăна пĕтерсе лартакан ĕç пулса тăнă пулĕччĕ.

Çак послани хыççăн Америкăпа Франци правительствисем пĕр-пĕринпе калаçса илнĕ. Февралĕн 24-мĕшĕнче Виши правительстви Америка посолне пĕлтерÿ панă. Çав пĕлтерÿре вăл çапла каланă: перемири çинчен тунă килĕшÿрен тухса тăракан обязательствăсене хирĕçлекен нимĕнле ĕçсем те тăвас суккине хапăл тусах йышăнать, урăхла туни Франция 1940 çулти июнь уйăхĕнче хăй çине илнĕ нейтралитет позицине пăсни пулĕччĕ, тенĕ. Çавăнпа та Виши правительстви çапла каланă: вăл вăрçă вăрçакан державăсене пĕрне те нихăш вырăнта та, вăрçă ĕçĕсен нихăш фронтĕнче те нимĕнле çар пулăшăвĕ те пама пулмасть, уйрăмăн каласан: Виши правительстви Франци судноисемпе вăрçăра усă курма памастех, тĕнĕл держависене пулăшу парас политикăна, перемири çинчен калакан килĕшÿри условисенчен иртсе кайма пултаракан политикăна туса пымĕ,—тенĕ.

Франципе Америка правительствисем хушшинче пулса иртнĕ калаçусем çинчен пĕтĕмĕшпех Англи правительствине пĕлтернĕ,—тесе каланă Уэллес.

Франци политики çинчен калакан çак заявлени Америкăпа Франци правительствисем хушшинчи отношенисене хак панă çĕрте питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать пулин те, Америка правительстви тата ытти кирлĕ ыйтусем тĕлĕшпе ĕç усăнах паларма пуçлассине кĕтсе тăрать, вара ун чух тин халыхи лару-тăрăва пĕтĕмĕшпех виççе тухса хаклама пулĕ.

Пичет представителĕсене Уэллес çапла каланă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче çакна пĕлсе тăраççĕ: Франция халь панă гарантисем çавăн пекех Францин Хĕвеланăç полушаринчи владенийĕсен нейтралитетне те пĕтĕмĕшпех пырса тивеççĕ. Çапах та çак ыйтăвăн питĕ кирлĕ енĕсем нумайĕшĕсем усăнах курăнмаççĕ-ха.

Германи экономикинчи йывăрлăхсем

СТАМБУЛ, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Германи экономики вăрçă пирки пĕтĕмĕшпех арканса каяс патне çитсе перĕннине халĕ ĕнтĕ Германин пичечĕ те пытарса тăраймасть. Германи промышленноçĕн чылай пысăк пайĕ йывăр кризис ăшне путса ларнă, мĕншĕн тесен промышленноçра чĕртавар та, рабочисем те, машина оборудованийĕсем те çитмеççĕ. Çавăн пирки те, «Франкфуртер цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, пит нумай предприятисене хупа-хупа лартаççĕ. Хаçатсем пĕлтернĕ даннăйсем тăрăх, Германи промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен шучĕ вăрçăччен хи вăхăтпа танлаштарсан 2 миллион çын чакнă. Çакă вăл рабочисене çара илнĕ пирки пулса тăнă. Пĕтĕм хуçалăх ишĕлме пуçланине халăхран пытарса тăрас шутпа, Германири влаçсемпе нимĕçсен хаçат-журналĕсем производствăна рационализацилесси çинчен алтăхсах кăшкăраççĕ. Швейцарире тухса тăракан хаçат «Нейе Цюрхер цейтунг» çав «рационализаци» мĕн иккенне Германин пир-авăр промышленноçĕнчи тĕслĕхсем çинче ытла та лайăх кăтартса парать. Хаçат çапла çырать: пир-авăр промышленноçĕнче хупман фабрикăсем сахал юлнă ĕнтĕ. Хупăнман предприятисенче ĕçлекенсем — пурте стариксем, çамрăк рабочисене пĕтĕмпех çара илнĕ. «Берлинер берзенцейтунг» хаçат çапла пĕлтерет: влаçсем предприятисен хуçисене хăйсем патĕнче ĕçлекен рабочисен списокĕсене тепĕр хут пăхса тухса вĕсенчен пĕр пайне çара ямашкăн предприятисенче ĕçлессинчен хăтарма хушнă.

Нимĕçсен аманнă салтакĕсене вырнаçтарма вырăн та çитмест

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Лондонра пухнă сведенисем тăрăх, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Варшава хулинче пур шкулсенчен те, чиркÿсенчен те, пысăкрах ресторансенчен те пĕтĕмпех госпитальсем туса пĕтернĕ. Нумаях пулмасть, Висла юханшывĕн сылтăм çыранĕнче гитлеровецсем сывмар пулнă тата аманнă салтаксем валли пысăк çĕнĕ госпиталь туса лартнă. Февраль уйăхĕнче кашни кунах Седлец хули урлă 7-шер поезд иртсе кайнă. Ку поездсем пурте фашистсен аманнă салтакĕсене турттарнă. Çапла ку хула урлă кунсерен темиçе пин аманнă салтак иртсе кайнă. Польшăн хĕвелтухăç пайĕнче пур çулсене те кунĕн-çĕрĕн Германи жандармерийĕн патрулĕсем сыхлаççĕ. Вĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен автомобильсемпе, грузовиксемпе, е тата мотоциклетсемпе таракан дезертирсене тытаççĕ.

ФИНЛЯНДИ СЕЙМĔН ДЕПУТАЧĔСЕНЕ ИРĔКСĔРЛЕНИ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Швеци хаçачĕсем Або хулинчи суд Финлянди сеймĕн сулахайри депутачĕсен ушкăнĕн ĕçĕ пирки йышăннă приговор çинчен пĕлтереççĕ. Кай Сундстрем депутата 8 çуллăха каторгăна ямалла тата 12 çуллăха граждăн прависемсĕр хăвармалла тунă, Кари Вийк депутата — 7 çуллăха каторгăна, 10 çуллăха граждăн прависĕр хăвармалла тунă. Кайс Мирья Рюдбергпа Илье Рейсянен депутатсене кашнине 4 çуллăха каторгăна, 6 çуллăха граждăн прависĕр хăвармалла, Вяйне Мелтти депутата — 3 çуллăха каторгăна, 5 çуллăха граждăн прависĕр хăвармалла, Микко Ампуя депутата — 2 çуллăха каторгăна, 4 çуллăха граждăн прависĕр хăвармалла тунă. Çак ĕçпех айăпланă Иоган Хелона (вăл Хельсинки хулин самоуправленийĕнче финанс пайĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ) — 3 çуллăха каторгăна ямалла, 5 çуллăха граждăн прависĕр хăвармалла тунă.

Вийк, Сундстрем тата ыттисем те — финсен социал-демократсен партин паллă деятелĕсем. Вĕсем çав партире сулахай оппозици лидерĕсем пулнă. 1940 çулта кĕркунне Таннер вĕсене пурне те парти ретĕнчен кăларнă, мĕншĕн тесен вĕсем Финляндин хальхи правителĕсем, вăл шутра Таннер та, гитлеровецсемпе сыхăнса ĕçленине тăрă шыв çине кăларнă. Гитлерла Германи Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăннă хыççăн Вийк депутата хирĕç, унпа пĕрле Финлянди сеймĕн малта асăннă ытти депутачĕсене хирĕç те, вĕсене пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе вăйлă кампани пуçласа янă, мĕншĕн тесен çав депутатсем Рюти-Рангель—Таннер политикине хирĕç кĕрешнĕ, Рюти-Рангель — Таннер компанийĕ Финляндие пĕтĕмĕшпех Гитлера сутнине тăрă шыв çине кăларса пынă. Сеймри сулахай депутатсен ушкăнĕ Финляндия Германи майлă пулса Совет Союзĕпе вăрçă пуçланине хирĕç тăнă. Пĕлтĕр сентябрь уйăхĕнче Финлянди сеймĕн депутачĕсене: Вийк, Сундстрем, Рюдберг, Рейсянен, Мелтти, Ампуя, çавăн пекех тата Хело депутатсене тĕрмене хупса лартнă. Вара декабрь уйăхĕнче тин вĕсене суда чĕннĕ. Сучĕ — хупă суд пулнă, мĕншĕн тесен айăпланакансем влаçсене хăйсене каллех тăрă шыв çине кăларасран хăраса тăнă.

Англи авиацийĕ Киль тата Вильгельмсгафен çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 28-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Киль, Вильгельмсгафен тата Германин Çурçĕр-Хĕвеланăçĕнчи ытти хулисем çине те вĕçсе пырса тапăннă. Çав çĕрех Англи истребителĕсем противник оккупациленĕ территори çинчи аэродромсем тĕлĕнче вĕçсе çÿресе операцисем тунă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Батаан çурутравĕ çинче Америкăпа Филиппин войскисем ĕнер контратакăсем туса малти позицисене каялла туртса илнĕ, халĕ çав позицисене Америкăпа Филиппин войскисем çирĕп тытса тăраççĕ.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Англи командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бирма фронтĕнче нимĕнле улшăнусем те пулман. Ситтинг юханшывĕн районĕнче противник Англи чаçĕсене çавăрса илнĕ пулнă, анчах та вĕсем çавăрса илнĕ унка татса тухса Англин тĕп вăйĕсемпе пĕрлешнĕ. Ситтинг юханшывĕн хĕвелтухăç çыранĕнче Японин пысăк чаçĕсем пĕр çĕрелле пухăнаççĕ, вĕсем Рангун еннелле наступлени пуçласа яма хатĕрленни палăрать.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: ĕнер кăнтăрла иртсен Ява тинĕсĕнче союзниксен флочĕ Ява утравĕ патне çурçĕр енчен çывхарса пыракан японецсен флочĕн пысăк соединенине атакăланă. Çапăçу каç пулса çитсен те чарăнман, икĕ енчен те çухатусем пур. Анчах камăн мĕнле çухатусем пулни паллă мар-ха, мĕншĕн тесен тĕрĕс сведенисем илмен. Япони флочĕн соединенийĕнче темиçе вунă судно та пулнă, вĕсем халĕ каллех çурçĕрелле кайнă.

Япони авиацийĕ ĕнер Сурабайя çине, Батави районне, тата Ява утравĕн хĕвеланăç пайĕнчи аэродромсем çине вĕçе-вĕçе пырса тапăннă. Сиенсем пысăках мар.

Целебес утравĕн кăнтăр пайĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Фронт участокĕсенчен пĕринче Голланди Индийĕн войскисем йышăнса тăракан позицисене Голланди Индийĕн войскисенчен чылаях йышлă противник атакăланă, анчах ку атакăна сирсе пăрахнă. Тепĕр районра Голланди Индийĕн войскисем японецсен позицине атакăланă. Суматра утравĕн варринчи пайĕнче Банка районĕнче «Джамбирен хĕвеланăçнерех) Голланди Индийĕн войскисем противника хирĕç çапăçнă. Тимор утравĕнче Голланди Индийĕн войскисем японецсен позицийĕсене атакăласа японецсене чылай пысăк çухатусем кÿнĕ. Çапăçусем çаплах пыраççĕ.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, Зонд проливĕнче (Явăпа Суматра хушшинче) Япони авиацийĕ Голланди Индийĕн карапĕсене атакăланă, пĕр карап çинче пушар тухнă.

Ява утравĕшĕн пыракан çапăçу

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ Бандунгран пĕлтернĕ тăрăх, унта официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: мартăн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле японецсем Ява утравĕн çурçĕр çыранĕсенчи виçĕ пунктра десант антарса хăварнă. Çав десантсем Бантам провинцинче (Батавирен хĕвеланăçнерех), Индармаджу çывăхĕнче (Батавирен 120 миля хĕвелтухăçнеллерех, Черибонран 40 миля хĕвеланăçнеллерех) тата Рембангра (Сурабайăпа Семаранг хушшинче) анса юлнă. Вара союзниксен тинĕс-çар вăйĕсемпе сывлăшри çар вăйĕсем çĕрĕпех вăйлăн çапăçса, Япони десанчĕсене йывăр çухатусем кÿнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Вашингтонра февралĕн 28-мĕшĕнче каçхине çапла пĕлтернĕ: февралĕн 27-мĕшĕнче японецсем Ява утравĕ çине десант антарма хăтланнă чух японецсенне «Мугами» крейсера тата виçĕ эсминеца сиенлесе спройран кăларнă. Американецсен подводнăй лодки противникăнне 5 судно путарнă, тесе шутлаççĕ кунта. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс-çар вăйĕсен, тăшман вĕсенчен темиçе хут йышлăрах пулнă пулин те, пысăк çухатусемех туман. Японин флотилийĕнче 40 транспорт шутланнă. Çак операцие Америкăн пĕр йывăр крейсерпа 5 эсминецĕ хутшăннă.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Кабулра СССР посольствинче пулнă йышăну

КАБУЛ, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Февралĕн 26-мĕшĕнче Кабулра Совет посольствинче Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пысăк йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура правительство членĕсем, Афганистан çарĕн высши командный составĕ тата туслă державăсен представителĕсем пулнă. Йышăну пит те кăмăллăн иртнĕ.

Монголи халăх Республикинчи ĕççыннисем Хĕвеланăç Фронтĕнчи боецсем патне янă парнесем

Февралĕн 28-мĕшĕнче Улан-батор хулинчен Мускава парнесем тиенĕ эшелон çитнĕ. Ку парнесене Хĕвеланăç фронтĕнчи боецсем валли Монголи Халăх Республикинчи ĕççыннисем ярaççĕ. Парнесене фронта делегаци çитерсе парать. Делегацие Монголи Халăх Республикин Министрсен Совечĕн председатель заместителĕ Луосан юлташпа Монголин революциллĕ халăх партин ЦК секретарĕ Янжима юлташ ертсе пыраççĕ. Делегаци составне çак юлташсем кĕреççĕ: Монголин революциллĕ халăх çарĕн майорĕ Шаздырсурун юлташ, Улан-Батор хулинчи промкомбинатри ударница Бассан юлташ, счетоводсем Дамба тата Пунцак юлташсем, инженер Горионова юлташ, партизан Чудаков юлташ, поэт Циндо Чир юлташ тата Монголин Халăх Республикинчи совет миссийĕ, çар аташи Филиппов юлташ.

Вокзалта хăнасене çак юлташсем кĕтсе илнĕ: Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн генеральнăй секретарĕ Соболев юлташ, Монголи халăх республикин Совет Союзĕнчи полномочнăй представителĕ Самбу юлташ, Хĕвеланăç фронтĕнчен килнĕ боецсемпе командирсен бригаднăй комиссар Макаров юлташ ертсе пыракан группи, Оборона Халăх Комиссариачĕн представителĕ пĕрремĕш рангри интендант Никифоров юлташ тата ыттисем те.

Кăмăллă калаçура монгол халăхĕн делегачĕсем парнесем пухас ĕç Улан-Батор хулинче те, пур аймаксенче те питех те пысăк хавхаланупа пыни çинчен каласа панă. Вĕсем илсе килнĕ парнесен эшелонĕ 37 вагонран тăрать. Çав вагонсенче 135 тонна сурăх така ашĕ, 8.000 литр хĕрлĕ эрех, кайăк-кĕшĕк ашĕ, çу, çăратнă сĕт тата ыттисем те нумай. (ТАСС).

Йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвĕ

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулас иртнĕ кросс вĕçленнĕ май, мартăн 1-мĕшĕнче йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăрту 5 кустра: Шупашкар хулинче, Канашра, Хĕрлĕ Чутайра, Кувакинăра, Чкаловскра пулнă. Унта республикăри 227 чи лайăх йĕлтĕрçĕсем хутшăннă. Вăл шутра 94 хĕрарăм.

Арçынсен командисем 10 километрлă дистанцие кайса килнĕ. Етĕрне районĕн команди пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вĕсен команди кăтартнă дистанцие, пĕрле шутласан, 3 сехет те 40 минутăра тухнă. Иккĕмĕш вырăнта—Хĕрлĕ Чутай районĕн 5 çынлă команди. Вĕсем 3 сехет те 46 минутăра тухнă. Çĕрпÿ районĕн команди 3 сехет те 46 минута та 40 секундăра тухса, виççĕмĕш вырăна йышăнма тивĕçлĕ пулнă.

Хĕрарăмсен командисенчен 3 километрлă дистанцие Советски районĕн команди 1 сехет те 25 минутăра та 31 секундăра тухса, пĕрремĕш вырăна йышăннă.

Уйрăм участниксем паха тĕслĕхсем кăтартнă. Г. Иванов (Хĕрлĕ Чутай) 37 минута та 25 секундăра, А. Александров (Çĕрпÿ)—38 минута та 35 секундăра, Федотов (Шупашкар хули) 41 минута та 20 секундăра тухнă.

Хĕрарăмсенчен 3 километрлă дистанцие Алексеева (Шупашкар хули) 13 минута та 52 секундăра, Лудикова (Хĕрлĕ Чутай р-чи «Великан» колхозри колхозница)—14 минут та 17 секундăра, Филичкина (Шупашкар хули)—14 минута та 21 секундăра тухнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарский лесоторговый склад ширпотреба

ИМЕЕТ ДЛЯ ПРОДАЖИ

местному населению на Милютинском лесозаводе следующие лесоматериалы по ценам прейскуранта:

1) горбыль полуфабрикат 2 метр.,
2) дощечка сосновая 2 метр.,
3) доски березовые 6,5 метр.,
4) бруски строительн. 6,5 метр.

ОБРАЩАТЬСЯ: г. Чебоксары, Перевозная, 10 телефон № 6-34.

В гор. Чебоксарах 26 февраля 1942 г. сбежал ЖЕРЕБЕЦ. 3 лет, караковой масти, между ноздрями проточина. Задержавшего просим сообщить по адресу: г. Цивильск, Государственная селекционная станция.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 64 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: лэ